# Муркаш районĕнчи вăрман варринчи ялта икĕ мăшăр пушмак пĕтернĕ журналист • 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР
1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

29(899) №, 2015, утă/июль, 25
Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

ÇĂЛТĂР ÇŸПÇИ

# "Пирĕн культура туристсемшĕн кăсăклă..."



**Светлана АСАМАТ, Чăваш наци музейĕн наука сотрудникĕ**

Çынсем музей ĕçченĕсем питĕ тăрăшса йĕркеленĕ куравсене çителĕклĕ çÿременни кулянтарать мана. Мĕн кирлĕ паян халăха? Мĕн кансĕрлет тăван халăхăн мухтавлă ĕç-хĕлне халалланă куравсене пырса тĕлĕнме, хавхаланма? Пĕтĕм чун хавалĕпе хамăршăн хамăр савăнма? Мĕнрен килет ку? Камран килет?

"Лаша пуласси – тихаран" тенĕ-рен, чăваш ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачи-сене чăваш пулса ÿсме вĕрентеççĕ-и? Ватти-вĕтти тăван культурăна, литературăна, çапăçу хирĕнче пуç хунă паттăр салтаксене, вăрçăран таврăннă çĕнтерÿçĕсене чăннипех чыслама пĕлет-и? Пĕлес тет-и? Çак ыйту канăç памасть мана...

Чăваш наци музейĕнче "В лесу прифронтовом" курав ĕçлет. Пысăках мар вăл, анчах та унта пыракансене каласа кăтартмалли мĕн тери нумай! Юрăпа ташă ансамблĕ, чăваш тата вырăс драма, пукане театрĕсем вăрçăри салтаксем, госпитальте сипленекенсем, уй-хирте тар тăкакансем, предприятисенче ĕçлекенсем патне концертсемпе çÿрени çинчен каласа кăтартать. Унтах çапăçусене хутшăннă композиторсем, драма артисчĕсем вăрçă вăхăтĕнче те, ун хыççăн та чăваш культурине аталантарма епле тăрăшни çинчен пĕлме пулать.

Мухтанас та килет вĕсемпе – культура ĕçченĕсемпе. "1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн" медальпе чи малтан чысланисен хушшинче – Л.Орлова, Л.Утесов, Д.Шостакович, К.Шульженко, В.Этуш тата ыттисем. Вĕсен йышĕнчех – çав çулсенче Чăваш юрăпа ташă ансамбльне ертсе пынă Г.Лебедевпа Ф.Лукин композиторсем. Унсăр пуçне – пурте пĕлекен, чăваш çĕрĕн сиплĕхĕпе аталаннă, СССР халăх артисчĕсем М.Михайлов тата Н.Мордвинов.

Курава пырса çÿрекенсем ыйтнипе илемлĕ тата документлă фильмсем кăтартатпăр. Вăрçă вăхăтĕнче тата ун хыççăн çуралнă юрăсене баянпа юрлатпăр.

Асăннă куравпа тĕрлĕ регионтан килнĕ хăнасемпе пĕрлех туристсем те паллашаççĕ: Самар, Сарă ту, Пермь, Владивосток, Швеци, Норвеги... Çак ĕçе йĕркелекенсене пуç тайса тав тăваççĕ.

Чăвашсем, çÿрĕр музейсене! Çĕклĕр, тархасшăн, хăвăрăн кăмăлăрсене! Пуянлатăр хăвăрăн чунăрсене!




| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 25.07 | +21 | +15 |
| 26.07 | +21 | +15 |
| 27.07 | +22 | +16 |
| 28.07 | +22 | +17 |
| 29.07 | +22 | +16 |
| 30.07 | +21 | +16 |
| 31.07 | +20 | +16 |

●Тутарстанра иртнĕ "Выля, хуткупăс!" фестиваль юрă-кĕвĕ ăстисене пуçтарчĕ — 2 стр.
●Коррупци чиновниксен хушшинче кăна мар, сывлăх сыхлав, вĕренÿ тытăмĕсенче те тарăн тымар ярать — 5 стр.
●Ыйхă килмесен, сухан чирлесен, пÿлĕмри чечек сарăхсан... — 8 стр.



ЧР ПА сайтĕнчи сăнÿкерчĕк

# "Ют ачасем çук..."

**Çак кунсенче Шупашкарти Дементьев урамĕнчи 1-мĕш çуртра ашшĕ-амăшĕсĕр çитĕннĕ çамрăксене хваттерсем пачĕç. Вунпилĕкĕн пулчĕç вĕсем, хăтлă çуртра тăван кил ăшши тупнисем.**

Тăлăхсене хваттер уççи панă ятпа иртнерĕ уява Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков, "СУОР" ООО генеральнăй директорĕ Владимир Ермолаев тата ыттисем хутшăнчĕç.

Тăлăх ачасем валли кăçал 61 хваттер хатĕрленĕ. Пурте вĕсем Дементьев урамĕнчи 1-мĕш çуртра вырнаçнă. Çулталăк вĕçлениччен тата 17 çамрăк çĕнĕ хваттер уççиллĕ пулĕ.

Шупашкар хулинче черет кĕтекен тăлăхсем – 531-ĕн, çав йышран 214-шĕ 18 çул тултарнă. Вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе малалла ĕçлеççĕ.

"Ют ачасем çук, вĕсем пурте пирĕн. Йывăр шăпаллăскерсене тĕрĕс воспитани парса халăха юрăхлă çитĕнтересси, пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пулăшасси – аслисен тивĕçĕ. Çамрăксене вара çутă малашлăх сунатăп. Тăван çĕре юратăр, ырă ĕçĕрсемпе Чăваш Ене, Раççее савăнтарăр", – терĕ Михаил Васильевич хваттер хуçисене ăнăçу сунса.

Михаил Игнатьев асăннă микрорайон ÿссе-сарăлса пынă май унăн инфратытăмне аталантарса кунта çитес çул тепĕр ача сачĕ, 2017 çулта 1200 вырăнлă вăтам шкул хута каяссине, çывăх вăхăтрах куллен кирлĕ таварсем сутакан лавкка-сем уçăлассине, общество транспорчĕ çÿреме пуçлассине пĕлтерчĕ.

**/Хамăр инф./.**

ФЕСТИВАЛЬ

# Выля, хуткупăс!



**Утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче Раççейри вичĕ теçетке ытла купăсçă, вăтăр пилĕк юрă-ташă коллективĕпе юрăç Тутарстанри Аксу районĕнчи Енрусьел ялне "Выля, хуткупăс!" 6-мĕш фестивале пухăнчĕç.**

Кунта Самар, Мурманск, Нурлат, Лениногорск, Элмет, Чистай, Çарăмсан, Елабуга артисчĕсемпе пĕрлех Чăваш Ен юрăçисем те хутшăнчĕç.

– Малтанах чăвашсен фестивалĕ пек йĕркеленнĕ "Выля, хуткупăс!" халĕ Раççей шайне куçрĕ. Пирĕн республикăра тĕпленнĕ халăх туслăхпа килĕшӳре пурăннине çирĕплетекен уяв ку, – терĕ Тутарстанри чăвашсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Константин Яковлев пухăннисене саламланă май.

Фестиваль хăнисемпе куракансене Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов, Тутарстан президенчĕн департаменчĕн наци политикипе ĕçлекен управленийĕн пуçлăхĕ Данил Мустафин тата Тутарстанри Халăх туслăхĕн çурчĕн директорĕ Ирек Шарипов саламларĕç.

Фестиваль туй йăли-йĕркине кăтартнинчен пуçланчĕ. Кивĕ Ӳселтен килнĕ пултарулăх ушкăнĕ хăйсем патĕнче ку йăла мĕнлерех иртнине кăтартрĕ. Чăвашсен мăшăрланупа вилĕм çын пурнăçĕнчи тĕп пулăмсем шутланнă. Хăнасем туй йăлине кăтартма лайăх хатĕрленнĕ. Хĕр сутнипе те, ашшĕ-амăшĕ пил панипе те паллаштарчĕç вĕсем.

Фестивальте чи лайăх купăсçă ятне Нурлатран килнĕ Василий Абрамов тивĕçрĕ. Вăл тӳресене чăваш кĕввине хăйне евĕр илемлетнипе, фольклора пуянлатнипе палăрчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Самар каччи Виктор Натаров. Çамрăка куракансем çирĕп сассишĕн кăмăлларĕç. Виççĕмĕш музыка инструментне вылянтарнă май вăрттăнни çинчен шарантарнă Николай Гришин /Лениногорск/ пулса тăчĕ.

Фестиваль Константин Яковлев çуралнă кунĕпе пĕр килни те пĕлтерĕшлĕ. Константин Геннадьевич çур ĕмĕр тултарнине шăпах çуралнă тăрăхĕнче паллă турĕ. Чăвашлăха упраса хăварассишĕн культура анинче пархатарлă тăрăшнăшăн вăл "Чăваш республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" ята тивĕçрĕ. Указпа Николай Угаслов паллаштарчĕ.

**Светлана САДЫКОВА.**
Тутарстан.

ÇЕМЬЕ ĂШШИ

# Çума-çумăн – аллă çул

**Чылайăшĕ çемьери пĕрремĕш йывăрлăхсенех çĕнтерейместь – уйрăлса каять. Хăшĕ-пĕри вара ĕмĕрлĕхе пĕрлешет. Мĕнре-ши çакăн вăрттăнлăхĕ?**

Ермеккей районĕнчи Эрехĕрри ялĕнче пурăнакан Петрпа Елена Яковлевсем çур ĕмĕр каялла – 1964 çулта – пĕрлешнĕ. Пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕнче мăшăр ылтăн туй палăртнă.

Иккĕшĕ те – вăрçă ачисем. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах вĕсен ашшĕсем фронта тухса кайнă. Пĕтĕм ĕç амăшĕсемпе ачисем çине тиеннĕ. Еленăн ашшĕ вăрçăран контузипе таврăннă. Шăпа ăна вăрăм ĕмĕр парнеленĕ – арçын 82 çул пурăннă. Анчах пурнăç тăршшĕпех пуçĕ ыратнипе тертленнĕ. Петĕр ашшĕ вара вăрçă суранĕсене пула пурнăçран 1946 çултах уйрăлнă. Амăшĕ Клавдия Родионовна ултă ачине ура çине пĕччен тăратнă.

Вăрçă хыççăнхи çулсем те çăмăл пулман.

– Пире выçлăх вилĕмĕнчен ĕне хăтарса хăварчĕ. Сĕт ĕçетĕн те – хырăм тутă. Тамара тантăшăм вара куç умĕнчех вилчĕ, – куççульпе аса илет иртнине Елена Петровна.

Чĕррисен вара малалла пурăнмалла. Вĕренӳ çулĕсем хăвăрт иртнĕ. Кăратмасри сакăр çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухни çамрăксен асĕнче юлнă. Петĕр вунçиччĕри Еленăна питĕ килĕштернĕ, çавăнтанпа уйрăлман та темелле.

Елена Эрехĕрри ялĕнчи библиотекăра ĕçлеме пуçланă, çав хушăрах каçхи шкулта вăтам пĕлӳ илнĕ, ун хыççăн техникума çул тытнă. Çак тапхăрта малтанах Петĕр ялта выльăх пăхнă. 1960 çулта унăн салтак ячĕ тухнă. Хĕсмет хыççăн Эрĕнпур облаçне ĕçлеме кайнă. Елена вара, библиотекарь дипломне илнĕ çамрăк специалист, тăван ялне таврăннă. Петĕр хуларан килсен çамрăксем çемье çавăраççĕ.

Кил хуçи водителе вĕренсе шоферта тăрăшать. Каярах ăна Ĕпхĕве стройка ĕçне алла илме яраççĕ. Çапла Яковлевсем тăван ялтах тĕпленеççĕ.

Елена Петровна вулавăшра ĕçленисĕр пуçне общество ĕçне хастар хутшăннă. Вăл йĕркеленипе иртнĕ культура мероприятийĕсен шучĕ те çук. Хĕрарăм "Пушкăрт АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" ята тивĕçнĕ. Петр Васильевич вара прорабра тăрăшнă. Темиçе çул колхоз ĕç-хĕлне те йĕркелесе пынă.

Яковлевсем ялта пысăк хисепре. Виçĕ ачи те çемьеленсе тăван килтен тĕрлĕ енне саланнă. Мăнукĕсемпе те мăнаçланмалăх пур. Кинĕ хунямăшĕн ĕçне малалла тăсать.

Çур ĕмĕр ытла тăсăлакан çемье телейĕн вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши? Яковлевсем ăна юратупа, килĕшӳлĕхпе, пĕр-пĕрне хисепленипе çыхăнтараççĕ. Çемье пуçĕн сăмахĕ çирĕп. Мăшăрĕ вара – çемье чунĕ, кил вучахĕн управçи. Унран таврана лăпкăлăх, ăшăлăх, ытарайми илемлĕх сарăлать.

"Чунтан-вартан килĕштереççĕ" тенĕ ваттисем ун евĕр мăшăрсем çинчен. Паянхи кун та Яковлевсем инкекре те, савăнăçра та çумаçумăн утаççĕ.

**Ирина МИХАЙЛОВА.**
Пушкăртстан.
**"Урал сасси" хаçат сайтĕнчи материалпа усă курнă.**

ПУЛТАРУЛĂХ

# «Шанăç» пики Надежда

**– Атте вăрçă пуçлансан икĕ уйăхран çуралнă. Асатте фронтра командир пулнă. Фашистсене хăвăртрах çĕнтерес тесе ывăлне Герман ят пама хушнă вăл. Шел, хăй вăрçăран таврăнайман, Крым çĕрĕ çинче пуçне хунă, – аса илет çывăх çыннисене Надежда Разинова.**

Канаш районĕнчи "Шупашкар – Чĕмпĕр" çул çинче ларакан Маякра çуралса ӳснĕ вăл. Чăваш чĕлхипе литературине юратнăран вăтам шкул пĕтерсен Чăваш патшалăх университетĕнчи филологи уйрăмне ыйту çырнă. Экзаменсене те аванах тытать хĕр, анчах тусĕ кĕреймерен Надя та документсене каялла илнĕ. Канашри финанс техникумне çул тытаççĕ хĕрсем, финансист пулса тăраççĕ.

1988 çулта алла диплом илсен Надежда Германовнăна Ульяновск облаçĕнчи Аслă Нагаткинăна яраççĕ. Çапла унăн пурнăçĕ ĕмĕрлĕх çак тăрăхпа çыхăнать.

– Пĕрле вĕренекенсене Удмуртие, Сахалина ячĕç. Çавăнпах маншăн Ульяновск облаçĕ инçе пулмарĕ. Унсăр пуçне ял çумĕпе иртекен аслă çул тăрăх шăпах Чĕмпĕре çӳрекен пысăк автобуссене ача чухнех ăмсанса пăхаттăм. Чун теме сиснех-тĕр. Пушшех те – Аслă Нагаткинăра тăвансем те пурччĕ, малтанах вĕсем патĕнче пурăнтăм, – каласа кăтартать хĕрарăм.

Мĕн пĕчĕкренех юрлама-ташлама юратнă Надежда. Çак ăсталăх амăшĕнчен ачисене куçнă. Малтан шкул хорне хутшăннăскер техникумра та юрлама чарăнман. Пурăнма çĕнĕ вырăна куçсан та культура çуртĕнче ансамбль пурри-çуккипе кăсăкланнă. Чăваш ушкăнĕ пулман ун чухне, анчах вырăс хорĕ палăрса тăнă. Уçă саслăскерне унта хаваспах йышăннă.

Юрă-ташă урлах Надежда Германовна пулас мăшăрĕпе паллашать. Евгений Вениаминович культура çуртĕнче ĕçленĕ, хĕр вара кунта часчасах репетицисене çӳренĕ. 1998 çулта çамрăксем шавлă туй кĕрлеттереççĕ. Халĕ Разиновсен çемйинче хĕрпе ывăл çитĕнет.

"Чăвашла пĕлмен чăваш" тет мăшăрĕ пирки хĕрарăм.

– Вăл пĕчĕк чухне çемье Казахстана куçса кайнă. Çавăнпах мăшăрăм чăвашла вĕренеймен. Эпĕ качча килсен те килĕнче вырăсла çеç калаçатчĕç. Эпĕ тăван чĕлхепе сăмахлама пуçларăм. Халĕ хунямапа чăвашла калаçатпăр. Иксĕмĕре те кăмăллă, – тет пултаруллă хĕрарăм.



Надежда Разинова яланах юрлать: савăнăçра та, кăмăлĕ япăх чухне те. Кулянмалли сиксе тухсан та чунне кĕвĕпе пусарать. Пĕр вăхăт, вырăс хорĕ пĕтсен, хăйне валли вырăн тупайман вăл. Ун пеккисем татах пулнă. Çавăнпах хора çӳренĕ чăвашсем пĕрле пухăнса Валентина Таравата ушкăн йĕркелеме тархасланă. Телее, лешĕ килĕшнĕ.

– Ансамбль маншăн – çăлăнăç. Юрă чире çĕнтерме те пулăшрĕ. Хирĕçсен те, чирлесен те, ыратсан та мĕнпур йывăрлăха иртterет вăл. "Шанăçпа" эпир ăçта кăна çитсе курмарăмăр пулĕ! – ырă та уçă кăмăлне пытармасть Надежда Разинова.

**Елена МУСТАЕВА.**
Ульяновск облаçĕ.



КĔТНĔ ХĂНА

# Чăваш Ене Патриарх килсе çитĕ

**Мускав тата пĕтĕм Руç Патриархĕ Святейший Кирилл 2015 çулта Чăваш митрополийĕне килсе курма икĕ çул каялла шантарнă. Тахçантанпах кĕтни тинех пурнăçланĕ. Кĕтнĕ хăна Шупашкара Илия пророк кунĕ умĕн, çурлан 1-мĕшĕнче, вĕçсе килĕ. Вăл Чăваш Ен тĕп хулине миçе сехет тĕлне çитесси хальлĕхе паллă мар. Патриарх Пукравпа Татиана чиркĕвĕнче каçхи кĕлĕ ирттересси пресс-конференцире шантарсах каларĕç.**

Пятидесятницăн 9-мĕш эрнинче, Святой Илия пророка асăнса уяă кун, çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче, Святейший Владыка Сĕнĕ Шупашкарти Апостолсемпе тан святой Владимир князь чиркĕвĕнче Литурги ирттерĕ. Ирхи кĕлĕ 9 сехет çурă тĕлĕнче пулĕ теççĕ. Таса Владимира халалласа лартнă палăк патĕнчен чиркĕве çитиччен Ун Святейшестви, Мускав тата пĕтĕм Руç Патриархĕ Святейший Кирилл çуранах утĕ, çавăнпа та ăна çывăхран курас текенсем, пил илме ĕмĕтленекенсем Сĕнĕ Шупашкарти собор патне пухăнма пултараççĕ.

Патриарх Чăваш митрополийĕне килсе курнин тĕллевĕсенчен пĕри – эпир Православи тĕнне еплерех тытса пурăннине, Турра ĕненсе чун-чĕрепе пуянланса пынине хăй куçĕпе курса пĕлесси.

**Римма ПРОКОПЬЕВА.**

СПОРТ

# Кашни спортсмен Олимп тăррине хăпартăр

**Пĕтĕм тĕнчери çуллахи Универсиада кăçал Кăнтăр Корейăри Кванджу хулинче иртрĕ. Раççей пĕрлештернĕ команди 34 ылтăн, 39 кĕмĕл тата 49 бронза медальсене тивĕçсе иккĕмĕш вырăна тухма пултарчĕ. Пухмача Чăваш Ен хĕрĕсен çĕнтерĕвĕсем те пуянлартрĕç. Кăçалхи Универсиадăра Раççей чысне чăваш тăватă спортсменĕ /2013 çулта – 7/ хӳтĕлерĕ. Пирĕн пикесем пухмача 5 медальпе йывăрлатрĕç.**

Хастар та маттур хĕрсемпе утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев тĕл пулнă. Çамрăксемпе, вĕсен тренерĕсемпе курнăçма ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов, ЧР физкультурăпа спорт министрĕн пĕрремĕш çумĕ Алексей Яковлев, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Елена Николаева тата аслă шкулсен представителĕсем те пынă.

Полина Федорова хăйĕн çĕнтерĕвĕпе пĕрремĕш савăнтарчĕ. Спорт гимнастикин пĕрлештернĕ команди малти вырăна тухрĕ. Утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче вара спорт мастерĕ харăсах икĕ медальлĕ пулчĕ. И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн студентки ирĕклĕ хăнăхтарусем туса – пĕрремĕш, пĕрене çинче хăнăхтарусем пурнăçласа иккĕмĕш пулса тăчĕ.

Мускав патшалăх машиностроени университечĕн Шупашкарти политехника институтĕн студентки Марина Пандакова вара 20 çухрăма иккĕмĕш утса тухрĕ. Хĕр Универсиадăна хутшăнмашкăн ятарласа Кăркăсри сăртлă-туллă вырăнсене кайнă.

Çанталăк шăрăх тăнăран хăвăрт утакансен старта ир-ирех тухма тивнĕ. Кун пек ларутăрура халиччен ăмăртма тӳр килменнине те палăртнă спортсмен. Çитĕнӳпе Маринăн тренерĕ Олимпиада Иванова та кăмăллă. Вăл вĕренекенĕ хăйĕн умне лартнă тĕллевсене пурнăçланине каланă. Кăшт каннă хыççă Марина каллех ĕçе пуçăнĕ: çитес çулхи Олимп ваййине хатĕрленме тытăнĕ.

Раççей пĕрлештернĕ командинче Чăваш Ен чысне хӳтĕленĕ Наталья Григорьева 800 метра чупса 9-мĕш вырăна тивĕçнĕ, Екатерина Федотова çӳллĕшне 7-мĕш кăтартупа сикнĕ.

– Чăваш Енре спорт аталаннине пурте курчăр. Эпир çитĕнекен ăру сывă пурнăç йĕркине пăхăнтăр тесе кирлĕ условисем тума тăрăшăпăр. Кашни спортсмен Олимп чемпионĕ пулма ĕмĕтленет. Сире те çавнах сунатăп, – тенĕ Михаил Васильевич.

ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе Универсиадăна хутшăнса медальсем çĕнсе илнĕ пикесене укçан хавхалантарнă. Вĕсен тренерĕсене Ирина Николаевăна Олимпиада Ивановăна та преми пама йышăннă.

**Татьяна НАУМОВА.**

ПЛЕНЭР

# Ял пурнăçĕ – пир çинче

**Профессионал художниксен Алексей Кокель ячĕллĕ Пĕтĕм тĕнчери 9-мĕш пленэрĕ утă уйăхĕн 8-21-мĕшĕсенче Патăрьел районĕнчи Турханта иртрĕ. Утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче Турханти шкулта Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен, çавăн пекех Украинăпа Беларуçран килнĕ талантлă сăрă ăстисен пĕтĕмлетӳллĕ куравне йĕркелерĕç.**

Художниксем çак кунсенче Турхан тавралăхĕнчи вырăнсемпе кăна мар, Юхмапа Пăла тăрăхĕнчи ытти яла та çитсе курнă, чăваш халăхĕн культурипе, йăли-йĕркипе, пурнăç шайĕпе паллашнă, тавралăх илемне, чăвашлăха пир çине куçарнă. Çак кĕске тапхăрта Кӳкеçри «Бичурин тата халăхи пурнăç» музейĕ та, Андриян Николаев космонавтăн тăван çĕршывне çитсе курма та ĕлкĕрнĕ, Ишлĕ Шетмĕре иртнĕ Патăрьел район кунĕнче савăнма та вăхăт тупнă художниксем. Пултаруллă сăрă ăстисем Турханти шкулта вĕренекенсем валли ăсталăх сехечĕсем йĕркеленĕ. Республикăри паллă художниксем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă. Пленэра савăнăçлă лару-тăрура хупнă çĕре Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ пулнă, халĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕн канашçи Лев Кураков академик, пленэр ертӳçи, культурологи докторĕ Владимир Васильев, Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Глухов, Турхан ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Сымов, Турхан шкулĕн директорĕ Владимир Иванов, ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ, Кокель мероприятийĕсене пуçарса яраканĕсенчен пĕри Валентин Сергеев, ял çыннисем, шкул ачисем хутшăнчĕç. Вĕренекенсем пухăннисене хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

9 çул хушшинче пленэра 118 художник хутшăннă. Çак хушăра вĕсем чылай чаплă картина ӳкернĕ. Асăннă ĕçсен пĕр пайĕ Чăваш патшалăх ӳнер тата Алексей Кокель музейĕсене, Турхан шкулне юлать. Картинăсенче – чăваш ялĕн пурнăçĕ. Кунта кивĕрех пӳртсемпе хура мунча, утă капанĕсем, вутă шаршанĕ, вĕллесем...

**Елена ГЛУХОВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Юрамалла, юраттмалла...

**Маргарита ИЛЬИНА**

Телей пирки сăмах хускатсан кашни хĕрарăмах тенĕ пек ачисене аса илет: "Вĕсен йăлтах лайăх пултăр – çавăн чухне кăна амăшĕн чĕри лăпкăн тапма пултарать". Мĕн тăвас тетĕн, качча тухнă çамрăк хĕрарăма психологсем упăшкипе те тимлĕ пулмалли пирки асăрхаттарсах тăраççĕ. Ахальтен-им арçынна çемьери аслă ачапа танлаштараççĕ? Тимлĕхĕ те, ачашлăхĕ те ăна пепкесенчен пĕрре те сахалрах кирлĕ мар. Анчах идеал шайне çитме ай-яй! çăмăл мар хĕрарăма та. Уйрăмах – ача тин кăна çуралнă хыççăн. Пĕчĕккер тавра çаврăнма пуçлать унăн тĕнчи: çитермелле, çумалла, якатмалла, пĕçермелле, тирпейлемелле, уçăлтармалла, выляттармалла, аталантармалла... Пĕтĕм "...малла"на асăнса та çитерес çук тупата. Кирлĕ пулсан массаж та тумалла, чирлесен сыватмалла. Ял хĕрарăмĕн кил картине, пахчине тухсан "...маллла"сен шучĕ геометри прогрессийĕпе ӳссе каять. Çав самантра тĕп "...малла" хĕрарăм пуçĕнчен пачах тухса ӳкме те пултарать: ара, упăшкана та юрамалла, юратмалла, ачашламалла... Çемьеллĕ пурнăçăн шăп çак тапхăрĕ кризиса çаврăнать арçынпа хĕрарăмшăн. Çамрăк арăм йĕркеллех çуратнă пулсан юрĕ-ха, анчах çăмăлланнă хĕрарăмăн тепĕр чух депресси пуçланма пултарать. Кун пек чухне ăна савнă мăшăрĕ мар, хăй тин кăна кун çути пилленĕ пепки те пачах та кăсăклантармасть. Эх, арçынна кăна мар, хĕрарăма та ăшăлăх кирли пирки темшĕн тăнчах манса каятпăр çав нумай чух. Çие юлнăранпа мĕн çуратиччен пулас амăшĕн организмĕнче мĕн тери хăватлă улшăнусем пулса иртеççĕ. Вĕсем вара характера та витĕм кӳреççĕ. Çакна ăнланса упăшкин те, çемьере ыттисен те çамрăк хĕрарăмпа çепĕçрех хутшăнсан аван пулмалла та. Шел, ку та нумай чухне ĕмĕт шайĕнче кăна юлать çав. Хуняма тени, тахçан хăй те çамрăк арăм пулнăскер, йăлтах маннă ĕнтĕ. Арçын вара... Арçын, арăмĕ ачи тавра кăна тĕпĕртетнине кунсерен сăнаканскер, шăпах çак тапхăрта айккинелле пăхма пуçланине палăртаççĕ специалистсем. Çавăнпа та ялта çуралса хулара тĕпленнĕ, ача çуралсан вара вăхăтлăха тăван киле, амăшĕ патне, пурăнма васкакансене психологсем асăрхаттараççĕ – мăшăрăра пĕччен ан хăварăр! Тепĕр тесен, çемьене аннене шанса чăмăртаман вĕт, ачана ăна шанса çуратман. Апла пулсан йывăрлăхсене шăпах мăшăрпа пĕрле парăнтармалла. Çавăнпах ача ӳстерес яваплăха хĕрарăмпа тан пайлакан арçын мухтава тивĕç. Юратура çуралнă, ашшĕ-амăшĕн ăшшине туйса ӳсекен ачаран телейли кам пултăр? Асăрхăсем вара пепки тĕрĕс-тĕкел, ырă-сывă çураласса кĕтеççĕ. Нумай хĕрарăм çĕнĕ чун хăй çак тĕнчене килнине систерсе шари! кăшкăрса ярсан вăл ывăл е хĕр пулни пирки мар – унăн пĕлтерĕшлех мар ку – алли-ури пирки ыйтать: вырăнтах-и? Унтан педиатр пырса тĕрĕслет пепке сывлăхне. Амăшĕ каллех сывламасăр, тухтăр çинчен куç илмесĕр тенĕ пек "приговор" кĕтет – чиперех-и?

Шел те, юлашки çулсенче ачапăча хавшак çураласси те, каярахпа чирлесси те тăтăш тĕл пулать. Унран та ытла, V ушкăна кĕрекен шăпăрлансен – сусăрсен – йышĕ çулсерен ӳссе пырать. Çула çитмен çамрăксен хушшинче, калăпăр, 2012 çулта 131 сусăр ачана шута илнĕ пулсан тепĕр çулах ку кăтарту самай ӳснĕ – 3089, 2014 çулта вара – 3284. Çакна медицина ĕçченĕсем ача-пăча сывлăхне профилактика тĕллевĕпе тĕрĕсленĕ май палăртнă. Пĕтĕмĕшле чир-чĕр тытăмне çапла пайланă: 16,7% куç чирĕсем, 16% шăмă тата тĕртĕм, 12,2% нерв тытăмĕ, 11,9% эндокрин тытăмĕ, 15,1% чирлĕ çуралнă. Телее, сывлăх II, III, IV ушкăнĕнчисен йышĕ çулран çул пĕчĕкленсех пынине палăртнă медиксем. Ас тăватăп-ха, тăхăрвуннăмĕш çулсенче педиатрсем I ушкăнра – нимĕнле чир-чĕрсĕр, апла 100 процентĕпех сывă – ачасем çураласси чаксах пынине калатчĕç. Анчах та пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, ку енĕпе те лару-тăру улшăннă, чи кирли – лайăх еннелле. 2012 çулта сып-сывă 40953 ачана шута илнĕ тĕк, 2014 – 57657. Савăнтаракан хыпар мар-и вара ку?

Сывă ача – ашшĕ-амăшĕн ватлăхри тĕрекĕ кăна мар, çĕршыв пуласлăхĕ те. Çамрăк ăру аталанăвĕ вара аслисенчен нумай килет. Апла тăк лăпкă ватлăх, çирĕп патшалăх çинчен паянах, вăй пур чухне, шухăшламалла. "...малла"сен шутне вара мăшăр хушшинче пайла... малла.

*Хисеплĕ вулакансем!*

"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çуррине илсе тăмашкăн

июль уйăхĕнчен тытăнса август уйăхĕн 31-мĕшĕччен –

ЙӲНĔ ХАКПА!

"ХЫПАР" – 625,62 тенкĕ

/кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йӳнĕрех/

"Хыпар"-эрнекун – 325,92 тенкĕ

/19,62 тенкĕ йӳнĕрех/

"ЧĂВАШ ХĔРАРĂМНЕ" 343,8 тенкĕпе çырăнтараççĕ

ЭКС-МИНИСТР

# 74 çулта çава туптама вĕреннĕ

**Тĕнчипех маннă, пĕр Турă кăна ас туса тăракан ялта, Муркаш районĕнчи Коминтернра, тĕпленнĕ Герольд Алексеевпа тĕл пулнă хыççăн "Чăваш хĕрарăмĕнче" экс-министрсен ярăмне уçас шухăш çуралнине вулакана пĕлтерменччĕ ĕнтĕ. Министр пуканне пушатнă хыççăн мĕнле пурăнаççĕ министерство тилхепине тытса пынисем? "ЧХ" тĕпелĕнче – 1988-92 çулсенче ЧР культура министрĕнче ĕçленĕ Герольд Михайлович Алексеев.**



## Çăтмах

"Таçта та пӳрт шырарăм, юлашкинчен çакăнта чарăнтăм. Эпĕ килсе пăхнă чухне çуркуннеччĕ, тавралăх тĕлĕнмелле хитреччĕ. Вăрманти ял мана ача чухнехине, Шăмăршă тăрăхне, аса илтерчĕ. Таврара шăп çеç, урамра ем-ешĕл çерем. Шăпчăкĕ юрлать, куккукĕ каçăхса кайсах авăтать. Кӳлĕ пур. Кун пек ырлăха урăх ниçта та тупма çук пулĕ терĕм", – мĕншĕн çакăнта тĕпленнинчен пуçларĕ сăмахне Герольд Михайлович. Яла кĕме хытă çул, кăвак çулăм çукки те шухăшлаттарман ăна вăл вăхăтра. "Вăрман юнашар, шăнса вилмĕпĕр-ха", – тенĕ ахăртнех.

Тĕп хуларан ытла аякра пулнăран хăй çуралса ӳснĕ Шăмăршă тăрăхне каяс темен экс-министр.

## Пысăк хуçалăх

Çуркунне килсен кӳршисем çуллахи вăхăтра Алексеевсем патне ятарласа пырса курма ахальтен сĕнмерĕç иккен мана. Мĕн тĕрлĕ кăна чечек çитĕнместши пахчинче! Анисса Павловна чылай вăхăт паллаштарса çӳрерĕ вĕсемпе. Турци гвоздики, лаванда, клематис, темиçе тĕрлĕ кĕлчечек, гортензи, лили, флокс, седум, жасмин... Таврана ырă шăршă саракан тата апат-çимĕçе тутă кĕртекен вун-вун тĕрлĕ курăк. Сарă, кăвак матрӳшке, пĕтнĕк, чапăр курăкĕ пахча тулли. Шур çырли, кĕтмел пуçтарма аякка каймалла мар. Вĕсем те пахчарах çитĕнеççĕ. Кашкăр çырли, хăмла çырли, темиçе тĕрлĕ йĕплĕ хурлăхан, çавăн пекех хури, хĕрли, шурри те – пĕр анкарти. Актиниди, исĕм çырли хуралтăсем тавра явăннă. Колонна евĕр улмуççи иртнĕ çул улмипе савăнтарма та ĕлкĕрнĕ, кĕркунне пĕр йывăçран кăна пĕр пысăк витре пухса илнĕ. "Кĕрхи пăрлă çумăр пире те шар кăтартрĕ, шурă акацисемпе пирамида йышши тирексене хуçса пĕтерчĕ. Халь ав хуллен вăй илеççĕ-ха", – пăшăрханса калаçать Анисса Павловна.

Выльăхсен çуллахи картишĕнче пĕр кĕтӳ сурăхчĕ. Ăслăскерсем, кăнтăр вăхăтĕнче хăйсемех сулхăна кĕрсе выртнă. "Эпĕ – виçĕ кун, юнашарти Антонина пĕр кун кĕтӳ кĕтет. Сăмах май, унашкал кӳршĕ сайра тĕлпулать. Хулана тухса кайсан та выльăх-чĕрлĕхе Антонина пăхать. Хурт уйăрнă, пыл юхтарнă чухне те чупса каçать", – каласа кăтартать Герольд Михайлович. Вĕллесен шучĕ çук пахчара. Çаваннă та анкартинче шăп çеç çӳрерĕмĕр. "Ку аннен вĕлли, ăна мана вăл пиллесех парнеленĕччĕ. Кăçал çанталăк хуртсене пыл туса илме памасть. Тен, çурла уйăхĕ хĕвеллĕ пулĕ, курăпăр? Эпир сутма мар, хамăра çиме туса илетпĕр", – терĕ Герольд Алексеев. Инди кăвакалĕсене тăватă ăстрăмпа кăларнă. Пысăккисем, маларах тухнисем, кӳлĕрен таврăнма та пĕлмесççĕ-мĕн. Пĕчĕккисене килте амăшĕ ертсе çӳретчĕ. Сăмах май, хăйсен тăрăхĕнчи йăлана халĕ те асра тытать экс-министр. Мăнкунра ир-ирех çăмарта çиме вĕçтерсе çитнĕ Антонинăна минтер çине лартнă вăл кăçал. "Асту, манăн чăх-чĕп ăнасси пĕтĕмпех санран килет, Тоня. Эс минтер çинче мĕнлерех ларнинчен, ытла ан хускал", – тенĕ лешне шӳтлекелесе. Аннă, чăннипех те, чăххи-чĕппи те, кăвакалĕ те картиш туллиех. Кӳрши шăп çеç ларнă курăнать.

## Йăх-несĕл

Анкартинчи улма-çырлапа, куçа йăмăхтаракан чечексемпе киленсе çӳренĕ хыççăн кермен пек çуртăн кашни кĕтесне пăхса çаврăнтăмăр, кайран картлашкапа çӳлти хута хăпартăмăр. Герольд Михайлович стена çине пурнăçри чи хаклă сыннисен – кукашшĕпе кукамăшĕн, аслашшĕпе асламăшĕн тата ашшĕпе амăшĕн – сăнӳкерчĕкĕсене вырнаçтарни куç тĕлне пулчĕ. Вĕсемпе юнашарах хăйĕн çемйи. Сăмах май, ашшĕ унăн вăрçăччен "Советская Чувашия" хаçатра пай пуçлăхĕнче, кайран республикăн кăнтăр районĕсенче ятарлă корреспондентра ĕçленĕ. Финн вăрçине ĕлкĕрейменрен ку хутĕнче те тăрса юласран хăраса Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хăй ирĕкĕпе 1941 çулхи çĕртмен 24-мĕшĕнчех тухса кайнă. Мăшăрĕ ача кĕтнĕ вăл вăхăтра. "Ывăл çуралсан Анат Чаткаса, атте-анне патне кай. Унта сана кирек мĕн тесен те çăмăлрах пулĕ. Шăнкăртамра ан юл", – тенĕ çула ăсанас умĕн арăмне. Чăн та, çурла уйăхĕнче çут тĕнчене ывăл килнĕ. Ăна Герольд ят панă. Шел, ашшĕ ывăл çуралнă хыпара пĕлеймен. Амăшĕ Александра Федоровна 35 çул шкул директорĕнче ĕçленĕ. Герольд Михайлович сывăх сыннисем çинчен сехечĕпех калаçа пама хатĕр. Йăх-несĕле лайăх пĕлет вăл.

## "Сутăнчăк"

Аслă шкултан мĕнпур пиллĕкпе вĕренсе тухнă Герольда Канаш районĕнчи Ăвăспӳрт Кипеч вăтам шкулне ĕçлеме направленипе янă. "Пĕтĕмпе 30 сехетчĕ, унсăр пуçне Канашри педагогика училищинче тепĕр 16 сехетчĕ. Балет шкулĕнчен вĕренсе тухнăран хореографи урокĕсем ертсе пыраттăм унта. Вăл çеç-и, колхозра агрокружок шанса панăччĕ мана, химипе биологи факультетне пĕтернĕскерне. Халь хам та тĕлĕнетĕп – ĕмĕр уй-хирте тар тăкнă механизаторсене эпĕ, çамрăкскер, тырă ӳстерме вĕрентнĕ. Шăп çеç итлесе ларатчĕç тата. Мĕн каласа кăтартнă-ши вĕсене?" – хăйĕнчен хăй ахăлтатсах кулать Герольд Михайлович.

Пĕр карчăк патĕнче пурăннине, унăн мăнукĕсемпе, 92 çулти кинĕпе паянхи кун та çыхăну тытнине, çак ялта хăйне халĕ те лайăх кĕтсе илнине ăшшăн аса илчĕ. "Каç енне сасă тухми пулатчĕ. Çавăн чухлĕ сехет ачасемпе калаçса пăх-ха. Киле таврăнсан хватер хуçи пĕр канăç памастчĕ тата. Эпĕ шкулта хăш тăхтав вăхăтĕнче кампа калаçса тăнине те таçтан пĕлетчĕ кинемей, çав çын манпа мĕн çинчен сăмах пуçарнине тĕпчетчĕ. Пĕр сăмахпа, кашни утăма сыхлатчĕ, киле çитсен сурçĕрчен пĕр чарăнми калаçтаратчĕ. Юратнă вăл мана, çав вăхăтрах пăшăрханнă та. Çапах та ют ялта-çке", – ырăпа асаилет кинемие Герольд Алексеев.

Вăл вăхăтра Ăвăспӳрт Кипеч шкулĕнче директорта Алексей Яковлев ĕçленĕ. "Мана Шупашкара комсомол обкомне чĕннине ертӳçе пĕлтертĕм. "Ĕç сĕннĕ чухне кай. Ан та ĕмĕтлен, сана хам вырăна çавах памастăп. Ялан учителте ĕçлес темĕн. Директор çумĕ те тăваймастăп, вăл та хăй çăкăрне парас çук", – терĕ Алексей Яковлевич", – çав кунсене куçĕ умне кăларать Герольд Михайлович.

Çултталăк çурă ĕçленĕ хыççăн тăрук пăрахса кайнă учителе ачасем вара часах каçарман. Пĕрре мар "сутăнчăк" тесе те çырнă Ăвăспӳрт Кипеч шкулĕн вĕренекенĕсем. Юратнă учитель шкултан кайнишĕн тарăхнипе. Культура министрĕнче ĕçленĕ вăхăтри пĕр пулăма манаймасть, çавăншăн паянхи кун та хĕпĕртет Герольд Алексеев. Филармони упраса хăварма пултарнă вăл. "Çав вăхăтра çине тăман пулсан паян камсен аллинче пулĕччĕ-ши?" – тет.

## Ырă çынсем çеç

"Кирек хăш тапхăра илсен те, ман тавра пурнăç тăршшĕпе пĕр усал çын та пулман. Паянхи кун та çавнашкалах. Кӳршĕсемпе те ăнать мана. Пирĕн ялта мĕнле йĕркеллĕ те ырă çынсемччĕ. Ăш пиллĕ Маюк аппана манаймастăп. Ïсти Миккулĕ /Валерий Яковлев режиссер аслашшĕ/, Яхвис Миккулĕ, Эмир, Велюш, Ильяс, Эхтюк тетесем тата ыттисем... Шăмăршăра вĕреннĕ чухнехи учительсем епле кăмăллăччĕ тата. Институтри преподавательсем ашшĕ-амăшĕçĕр юлнă вăрçă ачисене экзаменра асаплантарса, турта-турта кăларса çавах "4" е "5" паллă лартатчĕç. Олигер доцента манма çук. Магомед Эльдаров атте вырăнĕнчехчĕ. Эпĕ начар тăхăнса çӳренине курнă ĕнтĕ вăл. "Герольд, çавăнта çур ставкăпа учитель кирлĕ. Каятăн-и?" – тетчĕ. Эпĕ вара савăнсах килĕшеттĕм. Пире, вăрçă çулĕнче çуралнăскерсене, малалла туртса пынă, аталанма, ура çине тăма пулăшнă. Çав çулсенче пурăнма май килнишĕн тем пек хĕпĕртетĕп. Урăхла вăхăт пулнă ун чухне", – çамрăклăха савăнсах аса илет Герольд Михайлович.

Çак кунсенче пахчинчи уттине иккĕмĕш хут çулас тенĕ Герольд Михайлович. Мăкалнă çавине ялти пĕр арçын патне йăтса кайнă, лешĕ, хĕрĕнкĕскер, туптаса парайман, анчах вĕрентсе янă. Мĕн тăвăн, пахчари çитĕннĕ утта вара çулмаллах. Таврăннă та хăех туптанă. "Мĕнех, пурнăç теме те вĕрентет, 74 çулта çава туптама вĕрентĕм. Чиперех çултăм. Малашне çынна йăлăнмастăп ĕнтĕ, хам та туптаса пама пултаратăп. Юрать, леш арçын ӳсĕр пулчĕ, унсăрăн вĕренеес çукчĕ-ха", – кулать кил хуçи.

## "Хĕрача айăплă"

Апатран аслă пулаймăн. Шурă кăмпапа çĕнĕ çĕрулмие çуллахи верандăра тутантăмăр. Калама çук тутлăччĕ! Чи хăтлă вырăн çакăнта пулĕ вĕсен. Çӳлти хутра – сывăрмалли пӳлĕм, веранда çуменчех – мунча-сауна. Çак çурта йăлтах илем, ăшăлăх кĕртсе тăраканĕ – кил хуçи арăмĕ, Анисса Павловна. Тин çеç И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн ют чĕлхе майлă вырăс чĕлхи кафедрин пуçлăхĕн ĕçĕнчен кайнă. "Çитет, канас, мăнуксемпе йăпанас килет. Ялта та ĕç нумай", – чунне уçать Анисса Павловна. Анисса Алексеева – ЧР вĕрентĕвĕн, РФ асла тата професси вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Патăрьел районĕнчи Тикешре Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă çул çуралса ӳснĕ Анисса Павловна. Ашшĕ А.Кăлканăн "Анисса" пьесине курнă хыççăн çемьере хĕр кун çути курсан юратса çак ята панă. Кăлкан хăй те Аниссăна курсан: "Ку манăн хĕр", – тенĕ. Сĕтел хушшинче ларнă май кил хуçисем иккĕшĕ мĕнле паллашнине те аса илчĕç. Пĕр институтрах вĕреннĕ-ха вĕсем, анчах та ун чухне сывăх калаçса курман. "Вăл мана, паллах, асăрхаман, эпĕ хорта çеç юрланă, Герольд вара – солист. Хитре ташлакан каччăна лайăх пĕлнĕ эпир", – пĕрле вĕреннĕ вăхăтсене куçĕ умне кăларать Анисса Павловна.

Аслă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Герольда института йышăну комиссине чĕнсе илнĕ. Анисса ун чухне преподавательте ĕçлеме тытăннă. Шăп çав вăхăтра ялтан Анисса Павловнăн тăванĕ вĕренме килнĕ. "Çав хĕрачана вĕренме кĕртес тесе тăрăшнă вăхăтра иксĕмĕр мĕнле туслашса кайнине те сисмерĕмĕр. Йăлтах ялтан килнĕ абитуриентка айăплă. Студентка пулса тăчĕ, чипер вĕренсе тухрĕ. Эпир те Аниссапа пĕрпĕринчен уйрăлаймарăмăр, çав вăхăтранпа кашни кун пĕрле", – ăшшăн кулать Герольд Михайлович.

## Влаç аса илет-ши е аса илмест те-ши?

Анисса Павловнăпа Герольд Михайлович икĕ хĕрпе пĕр ывăл çитĕнтерсе ура çине тăратнă. Тĕпренчĕкĕсем ачисемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ патне часчасах килсе çӳреççĕ. Ывăл-хĕрне, мăнукĕсене те кунти çăтмах тĕнчи, улах вырăн килĕшет. Çул çукки çеç пăшăрхантарать. Эпир те киле кайма тухсан çав вăрман варринче путса лартăмăр. Юрать, Герольд Михайлович ял çыннисене пĕрле илсе пулăшма чупса çитрĕ. Унсăрăн лачакаран тухасси пулмастчĕ çав кун. Çапах та вырăнти тата район администрацийĕ ăçта пăхать-ши? Коминтернра ватă та чылай. Нумай пулмасть Ивановсен пепке çуралнă. Пĕчĕк ял пулсан та, хĕллехи вăхăтра ултă çын хĕл каçать кунта. Çуллахи вăхăтра вырçăлккă йăлтах чĕрĕлет. Шел те, япăххи те, васкавлă пулăшу чĕнесси те пулать пурнăçра. Коминтернсене Турă кăна мар, влаç та манăçа кăлармасса шанас килет.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ПРАВО ХУРАЛĔНЧЕ

# Ултавăн ури кĕске

**2011 çулхи кăрлач уйăхĕнчен пуçласа пирĕн çĕршывра хăйне уйрăм тытăм – Раççей Федерацийĕн следстви комитечĕ – ĕçлеме пуçланă. Шупашкарти Ленин районĕнчи следстви уйрăмĕ, унта ертÿçĕпе пĕрле 11 çын вăй хурать, шăпах çак тытăма кĕрет. Кунта ĕçлекенсем йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене оперативлă та витĕмлĕ тишкереççĕ. Суд процесне хутшăнакансен саккунла интересĕсене тивĕçтересси те уйрăм тĕллевĕсен шутне кĕрет.**



2015 çулăн пĕрремĕш çурринче çак уйрăм следователĕсем 101 уголовлă ĕç пуçарнă, 53 йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене тишкернĕ. Вĕсен хушшинче çынна вĕлернипе, пусмăрланипе, вăрланипе, ĕç йĕркине пăснипе çыхăннă тĕслĕхсем пур. Çавăн пекех должноçпа, коррупципе çыхăннă преступленисене те, право уйрăм статусĕнчи çынсем тунă усал ĕççене те тĕпченĕ следовательсем.

Коррупцие хирĕç кĕрешесси пирĕн уйрăмшăн уйрăмах приоритетлă пулса тăрать. Çур çулта следовательсем çакăн йышши 13 ĕçе тĕпченĕ, уголовлă 9 ĕç пуçарнă. Паллах, коррупци халĕ кăна çуралман, малтанах пулнă вăл. Анчах та паянхи кун унпа кĕрешесси вăйланса пырать. Рынок аталаннă, бизнес вăй илнĕ май коррупци умĕнче çĕнĕ алăксем уçăлаççĕ. Взятка илнипанине пула явапсăрлăх тата хăйсене айăпсăр туясси аталанать. Коррупцие вăй илме бизнес та пулăшать – шăпах усламçăсем унăн çăлкуçĕ пулса тăраççĕ те. Çакăн йышши преступленисене влаç çыннисем тăтăшах тăваççĕ, хăйсен пурлăхне темшĕн вĕсем патшалăхăннипе пăтраштараççĕ. Суда ача сачĕсен ертÿçисем пирки çакăн йышши 2 ĕç çитернĕ. Вĕсем çынсене ĕçе илсе "вилĕ чунсене" муниципалитет хыснинчен шалу тÿлесе тăнă. Лешсем вара ĕç вырăнне пырса та курăнман. Çапла "Кораблик" 106-мĕш ача сачĕн ертÿçи дворнике 2011 çултанпа ĕç укçипе тивĕçтернĕ. Лешĕ унта пачах та вăй хуман пулин те. Çапла майпа Шупашкар хулин хыснине 282000 тенкĕ шар кăтартнă. Хальхи вăхăтра И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ректорĕ пулнă çын тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе тĕпчеççĕ. Ăна хăйне усă кÿрес тĕллевпе 450000 тенке саккунсăр тăкакланă тесе шанмаççĕ.

Коррупци сывлăх сыхлав тата вĕренÿ тытăмĕсенче тарăн тымар янă. Следстви уйрăмĕ республикăри ачасен клиника больницин хирурги уйрăмĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç вĕçне пăнчă лартнă – хирурга 12 пин взятка илнĕ тесе айăплаççĕ. Тепĕр чухне следстви органĕсем оперативлă ытти службăпа тачă çыхăнура ĕçлени те ăнăçу кÿрет. Çапла майпа полици сотрудникне взятка пама тăнă мăшăра уголовлă явап тыттарнă. Уголовлă тепĕр ĕç вĕçне те пăнчă лартнă: ИК-1 учрежденире ĕçлекен хăй вăй хуракан çĕре илсе кĕме юраман япаласене çапах та илсе çитернĕшĕн взятка илнĕ. Анчах та усал ĕçе тăрă шыв çине кăларнă.

Пĕлтĕр хĕлле Шупашкара тискер ĕç кисретнĕччĕ. Хулара пурăнакан виçĕ çын хăйсен пĕлĕшне вĕлернĕ те кĕлеткене автомашинăна тиесе "Мадагаскар" патне илсе кайнă, ун сывăхĕнчи шăтăка пăрахнă. Виле ÿтне унта та выртма паман. Пĕр вăхăтран унтан та кăларса полиэтилен хутаçпа чĕркенĕ, Атăл хĕррине илсе çитерсе унта маларах хатĕрленĕ шăтăка чавса чикнĕ. Усал ĕçе явăçнисене пурне те явап тыттарнă.

Б.Хмельницкий урамĕнчи 4-мĕш микрорайонти 7-мĕш позицири нумай хутлă тин çĕкленекен çуртăн лифт шахтине ÿкни пирки уголовлă ĕç вĕçне пăнчă лартма питĕ кăткăс пулчĕ. Инкеке пула шар курнин ури суранланнă, сывлăха йывăр сиен кÿнипе танлашать ку. "Чăвашлифт" ĕç хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерменнипе, йĕркене пăхăннине тĕрĕслесе тăманнипе сăлтавланнă çак инкек.

Преступленисене тишкернипе пĕрлех следстви органĕсем усал ĕç çинчен пĕлтернĕ хыпарсене те тишкереççĕ. Çур çулта çакăн йышши 130 ыйтăва пăхса тухнă, 20 граждана йышăннă.

Уйрăмăн тепĕр тĕллевĕ – хÿтлĕхсĕр граждансене социаллă хÿтлĕхпе тивĕçтересси. Ачасен прависене пăснă ĕççемпе уйрăмах тимлĕ ĕçлетпĕр. Çула çитменнисене кÿрентерессине ÿссех пынине статистика та çирĕплетет. Кăçал кăна ÿсекен ăрупа çыхăннă уголовлă 14 ĕçе пăхса тухнă. Вĕсенче 3 çамрăк вилнĕ. Çак преступленисене уçас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлетпĕр. Çулталăкри хĕрачана вĕлернĕ уголовлă ĕç вĕçне кĕçех пăнчă лартăпăр. Иртнĕ çулсенче пулса иртнĕ ултă преступление те уçса панă ĕнтĕ – виççĕшĕ вĕсенчен пусмăрланипе çыхăннă.

Усал ĕçе тăрă шыв çине кăларас тĕллевпе уйрăм сотрудникĕсем кану е уяв кунĕсене уямасăр тимлеççĕ. Вĕсен принциплăхне тата профессионализмне пула преступниксене явап тыттарма май килет.

**Раççей следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕн Шупашкарти Ленин районĕнчи уйрăмĕн ертÿçи юстици майорĕ А.ШАРИН.**

БРИФИНГ

# Ăсталăх çулсем иртнĕ май пухăнать

**Раççейри следстви органĕсенче ĕçлекенсен кунĕ умĕн РФ следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕ кăçалхи çур çулта туса иртternĕ ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ.**

Кăштах историе асăнас пулсан, утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче çулсерен следстви органĕсенче ĕçлекенсен кунне уявласси çинчен указа 2013 çулта алă пуснă. Мĕншĕн шăпах çак куна суйланă-ха? 1713 çулта I Петĕр патша М.И.Волконскин следстви канцелярине çак кун туса хунă. Патшалăх ертÿçине тÿрремĕнех пăхăнакан, следстви иртterme пултаракан пĕрремĕш орган пулса тăнă вăл. Унăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри патшалăхра коррупципе çыхăннă ĕç-пуçа сиресси шутланнă.

Раççейри уйрăм структура пек Следстви комитечĕ нумаях пулмасть çеç – 2010 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕнче йышăннă саккунпа килĕшÿллĕн – йĕркеленнĕ-ха. Ку таранччен вăл РФ прокуратури çумĕнчи шутланса тăнă. Следовательсем те прокуратура ĕçченĕсем шутланнă. Паян вара ку патшалăхăн пачах уйрăм органĕ. Вăл никама та пăхăнмасть, нихăш влаç юппи те шутланмасть.

Пирĕн республикăри следстви ĕçĕсене тытса пыма комитет йĕркеленсен унăн управленийĕ уçăлнă. Паянхи куна Чăваш Енре унăн уйрăмах пысăк ĕççене тишкерекен икĕ уйрăмĕсĕр пуçне тата Çĕнĕ Шупашкарта, Канашра, Çĕмĕрлере, Етĕрнере, Çĕрпÿре, Патăрьелĕнче уйрăмсем пур. Кăçалхи кăрлачран пуçласа вара тĕп хуламăрта кашни районта пĕрер следстви уйрăмĕ ĕçлет.

Вĕсен вара тĕпчемелли, шырамалли, палăртмалли темĕн чухлех. Пушшех те – республикăра преступленисен йышĕ ÿсни сисĕнет. Акă иртнĕ çул управленире ултă уйăхра саккуна пăснă 6889 тĕслĕхе шута илнĕ тĕк, кăçал – 7648. Çакă вăрласси /1750-ран 2297-е çитнĕ/, хĕнесси /1072-рен 1304 çитнĕ/ йышланнипе те çыхăннă. Уйрăмах йывăр преступленисен йышне кĕрекен 320 тĕслĕхе шута илнĕ. Ку пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан 55 чухлĕ сахалрах.

Следстви управленийĕнче ĕçлекенсем çулталăк пуçланнăранпа 1800 яхăн ĕçе тишкернĕ, 905 уголовлă ĕç пуçарнă. 662 çын тĕлĕшĕпе 657 уголовлă ĕçе вĕçленĕ.

Тăкака саплаштарассине те пысăк тимлĕх уйăраççĕ вĕсем. Çавăнпах 347 млн тенкĕрен 271-шне тавăрма май килнĕ. Следовательсем айăпланаканăн е унăн тăванĕсен пурлăхне арестлес мелпе те анлă усă кураççĕ.

РФ Следстви комитечĕ йĕркеленнĕренпе республикăри следстви управленийĕн ĕçченĕсем 29 пин преступлени çинчен пĕлтернине пăхса тухнă. 6 пин ытла уголовлă ĕç пуçарнă, 4,5 пинĕшне вĕçленĕ, уголовлă майпа 5 пин яхăн çынна айăпланă. Уголовлă ĕççене тĕпченĕ май следовательсем вĕсен пĕтĕмĕшле тăкакĕ 2 миллиард та 160 миллион тенкĕпе танлашать тесе палăртнă. Чылайăшне тавăрма май килнĕ.

Уйрăм çынсене хирĕç тунă преступленисене – вĕлернине, вĕлерме хăтланнине, вилмеллех хĕненине – те уйăрмаççĕ следовательсем. Кăçалхи çур çулта кăна кун пек 51 тĕслĕхе шута илнĕ. Пурне те уçăмлатнă ĕнтĕ. Асăннă преступленисенчен 32-шне ÿсĕрле туни те паллă. 11-шĕ вара килти йывăр хутшăнусемпе çыхăннă.

Çын сывлăхне ятарласа хавшатнăран, амантнăран вилнĕ тĕслĕхсем кăçал 11-пе танлашнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăрта ку кăтарту самай пысăк – 28 – пулнă. Пурте эрех-сăрапа минренĕрен хăтланнăскерсем.

Тĕрлĕ сăлтава пула малтанхи çулсенчех вĕçлеймен ĕççенче пăнчă лартас енĕпе те тăрăшаççĕ. Кăçал кун пеккисем хальлĕхе – 19. Право хуралĕн ытти органĕсемпе тачă çыхăнса ĕçленĕренех чылай вăхăт вĕçнехĕрне çитеймен 197 преступление уçăмлатнă. Вĕсен йышĕнче – çынна вĕлернĕ 10 тĕслĕх.

Коррупципе çыхăннă ыйтусене тĕпчесси республикăри хăть те хăш право хуралĕн органĕн те тĕп тĕллевĕсенчен пĕри пулса пырать. Çав шутра – следстви комитечĕн те. Çавăнпах кăçалхи 6 уйăхра РФ СК ЧР Управленийĕнче коррупципе çыхăннă 237 уголовлă ĕç пуçарнă, 45 çынна айăплă тесе йышăнма ĕлкĕрнĕ.

Следовательсем шутланă тăрăх, кăçалхи пĕрремĕш çур çулта коррупципе çыхăннă ĕççенче 5 миллион тенкĕ ытла укçа "вылянă". Пĕлтĕрхинчен икĕ хут нумайрах ку. Тĕрлĕ мелпе усă курса 1 миллион тенке каялла тавăрма май килнĕ.

4,5 çулта Чăваш Енри следовательсем коррупципе çыхăннă 1650 ытла уголовлă ĕç пуçарни, судсене 1000-шĕ тĕлĕшĕпе 330 ĕç çитни паллă.

Саккунсăр майпа вăйă бизнесĕ йĕркелекенсене тупса палăртасси те – следовательсен яваплă тивĕçĕ. Азартлă вăйă вылма салон йĕркеленĕшĕн /çав шутрах Интернет, кĕсье телефонĕ урлă та/ иртнĕ çул уголовлă яваплăха ÿстернĕ – халĕ çак бизнесран пысăк тупăш илнине çирĕплетме кирлех те мар, ахалех айăплаççĕ.

ЧР ШĔМĕпе туслă ĕçлесе иртнĕ çул вĕçĕнче тата кăçал саккунсăр вăйă бизнесĕ уçнипе çыхăннă икшер уголовлă ĕç пуçарнă, пĕрерĕшне пăхса тухма суда ярса панă. Саккунсăр майпа ĕçлекен 45 салона хупнă, 1200 ытла вăйă оборудованине туртса илнĕ, уголовлă яваплăх умне 31 çынна тăратнă. Тĕрлĕ 5 ушкăнра тăраканскерсем Шупашкар, Канаш, Çĕрпÿ хулисенче тата Красноармейски районĕнче тупăш тунă.

Экстремистла ĕç-хĕл ан сарăлтăр тесе те сахал мар ĕçлеме-сăнама тивет. РФ юстици министерстви ятарлă материалсен списокне те хатĕрленĕ. Унта тĕрлĕ наци çыннипе расна тĕне ĕненекен хушшинче хирĕçтăрăва чĕнекен материалсене кĕртнĕ. Çавăнпах кун пеккисене Интернетра сарнине тимлĕ тишкереççĕ. Тĕрлĕ пăтăрмаха çакланас мар тесен социаллă сетьсенче ларнă чухне те асăрханмалла. Пĕр-пĕр материала вуланă хыççăн та "килĕшрĕ" тесе тÿрех пусма, хăвăр страница çине куçарма сĕнмеççĕ. Шухăшламан çĕртенех айăпланма та пулать-çке. Унсăр пуçне кун пек материалсене асăрхасан тÿрех право хуралне пĕлтермелле. Кăçал ку тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă 10 ĕç те экстремистла шухăшлă матералсене Интернетра сарнипе çыхăннă.

Налук вăхăтра тÿлеменшĕн айăпланакансем те пур. Кунашкаллисене кăçал 21 пуçарма ĕлкĕрнĕ. Виççĕшне суда ярса панă. 5-шне – амнистие тата 5-шне тăкака саплаштарнипе вĕçленĕ.

Следовательсен тишкермелли, сăнамалли, тĕпчемелли, асăрхамалли темĕн чухлех. Çавăнпах час-часах кану кунĕнче те çĕрлеччене тытăнса тăма тивет. Унсăр пуçне кашни ĕçех 30 кунра вĕçлемелле. Çăмăл маррипех хăшĕ-пĕри чăтаймасть те. Теприсем вара чунĕ туртнăран, професси сумлă пулнăран, тивĕçлĕ те ăслă çынсемпе юнашар ĕçленĕрен кунта нумайлăхах юлаççĕ.

Чăваш Енри следовательсенчен çуррин ĕç стажĕ 5 çултан ытла та мар иккен. Эппин, коллектив çамрăк та хастар. Вĕсен вара вĕренмелли те нумай-ха. Ахальтен мар нумай çул тăрăшакансем юридици пĕлĕвĕ ĕçе вырнаçма çеç кирлĕ теççĕ. Кашни преступлени расна пулнăран вĕсене уçăмлатас ăсталăх, опыт çулсем иртнĕ май пухăнать.

**Татьяна НАУМОВА.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Хуратул салачĕ



**1 стакан пĕçернĕ хуратул кĕрпи, 1 пуç сухан, 1 кишĕр, 100 грамм хытă сыр, 100 грамм купăста, тăвар, пăрăç, тип çу, ешĕл çимĕç кирлĕ.**

Купăстана турамалла, тăварпа пăрăç сапса алăпа çăрмалла. Суханпа кишĕре, сыра улăм пĕрчи евĕр турамалла. Çимĕçсене тăварпа тип çу ярса хутăштармалла. Ешĕл çимĕçпе илемлетмелле.

### Кăмпапа пăшăхланă хăяр

**Тăварланă 3-4 хăяр, 100 грамм хăть те мĕнле кăмпа, 70 грамм корейла хатĕрленĕ кишĕр, 1 пуç сухан, 2 чей кашăкĕ 3 процентлă уксус, çур чей кашăкĕ сахăр, 1,5 апат кашăкĕ соя соусĕ, пăрăç, ешĕл укроп, консервланă куккурус кирлĕ.**

Хăярсене тăрăхла касса чей кашăкĕпе varrine хырмалла та 5-10 минутлăха ăшă шыва ямалла. Сăрăхтарсан хăяра соя соусĕпе пăрăç сапмалла. Сухана шултăран турамалла, сахăрпа уксус ярса пăтратмалла. Кăмпана маринадран кăларса чӳхемелле, сăрăхтармалла, турамалла. Кишĕре те вĕтетмелле. Сухана, кишĕре, кăмпана хутăштармалла та хăяр ăшне тултармалла. Апата ешĕл çимĕçпе тата куккуруспа илемлетмелле.

### Ветчина рулечĕ

**200 грамм ветчина, пĕçернĕ 2-3 çăмарта, 2-3 шăл ыхра, 2-3 апат кашăкĕ майонез, 100-200 грамм хытă сыр кирлĕ.**

Ветчинана çӳхен касмалла. Çăмартана шуратса саррипе шуррине уйăрмалла. Саррине вилкăпа вĕтетмелле. Сыра теркăламалла. Ыхрана вĕтетмелле. Сыра, ыхрана, çăмарта саррине майонез хушса пăтратмалла. Ветчинан кашни татăкĕ çине 1 апат кашăкĕ хутăш хурса чĕркемелле. Апат хатĕр.

### Улма-çырлапа сысна какайĕ

**Сыснан 500-600 грамм тачка какайĕ, 200 грамм консервланă ананас, 1 апельсин, 2 пуç сухан, 2 кишĕр, 150 грамм хытă сыр, 75 миллилитр соя соусĕ, тип çу; илемлетме: салат çулçи, базилик, 1/4 апельсин, 1 кишĕр кирлĕ.**

Какая татăксемпе касмалла, çапса çемçетмелле, тăварпа пăрăç сапса икĕ енчен те ăшаламалла. Апельсина турамсене уйăрмалла, хуппине сӳмелле. Ананас шывне сăрăхтармалла. Сухана шуратса вĕттĕн турамалла, кишĕре шултăран теркăламалла, çимĕçсене 5-7 минут тип çупа ăшаламалла. Ананаспа апельсин хушмалла, соя соусĕ ямалла та тата 3 минут ăшаламалла. Какай кашни татăкĕ çинех 2 апат кашăкĕ çимĕç хутăшне хумалла. Сыра çӳхен касса çиелтен вырнаçтармалла. Сыр ирĕлме апата хупăпа витсе çулăм çине лартмалла. Какая салат çулçи сарнă савăта кăлармалла, илемлетмелле.

### Тăпăрчă кукăлĕ

**200 грамм услам çу, 500 грамм тăпăрчă, 1,5 стакан çăнăх, 4 апат кашăкĕ крахмал, 3 çăмарта, 500 грамм хăйма кирлĕ.**

Тăпăрчăн çуррине, çăва, 1 стакан çăнăха хутăштармалла. Чустана сарса çатмана хумалла та 1-2 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла. Çăмартаран, хăймаран, юлнă тăпăрчăран, крахмалран, çур стакан çăнăхран чуста лăкамалла та сивĕннĕ тăпăрчăпа çу çине сармалла. 160 градуса çити хĕртнĕ духовкăра 1 сехет пĕçермелле.

### Йӳçнĕ сĕт пĕремĕкĕ

**Чуста валли: çур литр йӳçнĕ сĕт, 2 стакан сахăр, 4 çăмарта сарри, 7 апат кашăкĕ тип çу, 1 чей кашăкĕ апат соди, 1 килограмм çăнăх, 2 апат кашăкĕ какао; глазурь валли: 4 çăмарта шурри, 1,5 стакан сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

Апат содине сĕте ямалла та 5 минут лартмалла. Çăмарта саррипе сахăра лăкаса йӳçнĕ сĕтпе хутăштармалла. Çăнăх, çу, какао ярса чуста çăрмалла. 10 минут лартнă хыççăн 1 сантиметр хулăнăш чуста сармалла. Стаканпа пĕремĕксем касса кăлармалла. 180 градуса çити хĕртнĕ духовкăра 25 минут пĕçермелле. Сивĕннĕ пĕремĕксене сахăр çăнăхĕпе лăканă çăмартана чиксе кăлармалла.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

## Сухан чирлет...

Сухан е ыхра çулçи саралма пуçлани инфекципе çыхăннă. Халĕ, çанталăк сивĕрех тата çумăра кайнă вăхăтра, сăмахран, пероноспороз текенни аптратма пултарать. Кун пек чухне çулçă çутă симĕс е сарă пăнчăсемпе хупланать. Çулçă саралать, сухан ӳсме пăрахать те типет. Ку амакран "Ридомил Голд" пулăшасса калаççĕ специалистсем. Чăн та, пĕрре сапнинчен усси сахал, йăрансене çăвĕпех, вунă кунра пĕрре, сирпĕтмелле унпа.

Тепĕр чухне сухан тăпрара азот çитменнипе те саралать. Анчах та кун пекки сайра пулать.

Сухан тепĕр тăшманĕ – унăн шăни. Сухан шăни ахальлинчен нимĕнпех те уйрăлса тăмасть, пĕчĕкрех кăна. Сухана, ыхрана, салатăн хĕш-пĕр тĕсне, çавăн пекех сухан евĕр тымарлă чечексене, калăпăр, тюльпана, сиенлеме пултарать. Ӳсен-тăран шанать, çулçи саралать, майĕпенех пĕтет. Сухан шăнипе кĕрешме ятарлă препаратсем сутаççĕ. Анчах та малтан килти меслетпех усă курни пăсмĕ. Пĕр витрене 100 грамм тăвар ярса çимĕçе шăвармалла. Çавăн пекех ытти ӳсен-тăранран хатĕрленĕ хутăшсем те витĕмлĕ: кушак курăкĕ, пĕтнĕк, пихта, ухмах йывăççи. Çавăн пекех сухан хушшине кишĕр лартни те унăн шăнине хăратĕ. Йăран çине йывăç кĕлĕ сапни те усăллă.



Енчен те севок сухан саралма тытăнчĕ тĕк – нимех те тума кирлĕ мар: çак çимĕç пулса пырать ĕнтĕ, унăн пĕтĕм вăйĕ пуç çавăрма каять, çулçи валли вăй çитменнипе вăл саралса пырать.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

### Тутлă яшка

●Шӳрпе тăрă пултăр тесен яшкана 10 минутлăха лайăх çуса тасатнă икĕ-виçĕ çăмарта хуппи ямалла.

●Пулă шӳрпине тăварпа лăканă çăмарта шурри хушса çутатаççĕ.

●Рассольник тути килмен пек туйăнсан унта тăварланă-маринадланă хăярăн вĕретсе сăрăхтарнă шывне хушаççĕ.

●Окрошка симĕс сухана çăмарта саррипе тата тăварпа сĕткенĕ тухиччен пăтратса ярсан тутлăрах пулать.

●Яшка пĕçермелли какайпа шăмма сивĕ шыва ямалла. Вăл хăвăртах вĕреме кĕтĕр тесе пысăк çулăм çине лартмалла. Вĕреме хатĕрленнĕ чухне тухакан кăпăка та тĕплĕ пуçтармалла, унтан çулăма пĕчĕклетмелле.

●Пулă яшкине тăвар какайлинчен ытларах хушмалла.

### Какай вăрттăнлăхĕ

●Пĕçериччен лимонпа е лимон йӳçекĕн шывĕпе сăтăрсан чăхпа кăркка какайĕ шурă та çемçе пулать.

●Сунар кайăкĕн тĕкне типĕлле тăпăлтармалла, юлашкисене çĕçĕпе касса кăлармалла. Çунтарнă хыççăн кайăка çăнăхпа йăвалямалла. Ăшне кăларнă хыççăн пĕр-икĕ сехетлĕхе сивĕ шыва чикмелле. Кун пек тусан какай çемçе те сĕтеклĕ пиçет.

●Вать чăхха пĕçериччен сĕтре е хăймара тытсан çемçерех пулать.

●Çăкăр вырăнне чĕрĕ кишĕр е çĕрулми хушсан фарш тутлăрах.

СЫВЛĂХ

## Шăлан

Шăлан шывĕ хатĕрлес тесен 150 грамм çырлана 1 литр вĕри шыва ярса 10 минут вĕретмелле, талăк лартмалла. Çуррине ярса илмелле те пыл хушса кунне виçĕ хутчен çуршар стакан ĕçмелле.

Юлнă çуррине çавăн чухлех вĕри шыв ярса тепĕр талăк лартмалла. Шыва малтанхи пекех пыл хушса ĕçмелле. Çырлана вара типĕтмелле.

Вăл килограмм майлă пухăнсан тип çу ярса духовкăна лартмалла е кастрюльпе пĕчĕк çулăм çинче 2 сехет пăшăхламалла. Сывлăхшăн паха япала – килте хатĕрленĕ шăлан çăвĕ пулĕ.

Унпа каснă е пиçнĕ вырăнсене сĕрмелле, апата хушма та юрать.

Шăланăн çырли çеç мар, чечекĕ те, çулçи те, тымарĕ те витĕмлĕ.

## Ыйхă килмесен

Ыйхă килменнипе асапланатăр тăк сире май килекен меле шырамалла: пӳлĕме уçăлтармалла, шыва кĕмелле, пĕр вăхăтра выртмалла.

Халăхăн вара тутлă ыйха путма хăйĕн мелĕсем пур.

●1 апат кашăкĕ пыла 1 стакан ăшă шывра ирĕлтерсе ĕçмелле.

●Сахăр татăкĕ çине 3-5 тумлам лаванда çуне тумлатса çăварта ирĕличчен тытмалла.

●1 пуç сухан çимелле. Ку пахчаçимĕç çывăрма пулăшакан лăплантаракан эмел те шутланать.

●Урасене ăшă шыва чикни те нерв тытăмне лăплантарса ывăннине ирттерме пулăшать.

●Лăсă янă е календула, пĕтнĕк, душица, мелисса настойĕ хушнă ваннăра 10 минут выртни те витĕмлĕ.

●4 апат кашăкĕ типĕтнĕ чĕре курăкне 1 стакан вĕри шыва ярса термосра 2 сехет тытмалла. Апат умĕн çур сехет маларах ăшăлла 0,3 стакан ĕçмелле.



ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

## Çулçă сарăхать

Жасмин евĕр гарденин çулçи сарăхать тăк эсир ăна е хытă шывпа шăваратăр, е нӳрĕк ытлашши. Ку чечек "ури" шăннине килĕштермест. Гардения ăшă тата çемçе шывпа сапнине кăмăллать.

Хытă шыва кăштах уксус хушса çемçетме юрать. Чечек папкине тăкасран пӳлĕмри температурăна пĕрешкел тытмалла. Папкасем курăнсан  чечеке час-часах шыв сирпĕтмелле, анчах çеçкене ларсан пĕрĕхмелле мар.

Чечеке пуш уйăхĕнчен пуçласа çурла вĕçĕччен икĕ эрнере пĕрре апатлантармалла. Çавăн пекех вăл çутă тата хĕвеллĕ вырăна килĕштерет.

## Драцена, фикус...

Тепĕр чухне хваттерте юсав ĕçĕсем ирттерни сиенлĕ те. Ара, хăш-пĕр материал сывлăша сывлăхшăн япăх япаласем – фенол, формальдегид, бензол – кăларать.

ДСПран хатĕрленĕ çĕнĕ сĕтел-пукан та сывлăша формальдегид сахал мар кăларать. Ăна тĕрлĕ йышши фикус лайăх çăтать. Çавăн пекех эпипремиум, сингониум, ихмея тата драцена та ку сиенлĕ япаларан сыхлать. Чылай наркăмăша нтуриум та çăтать. Сывлăша тасатассипе хлорофитума, плюща, хризантемăна тата алоэне çитекенни çук.

Енчен те кухньăра газ плити ĕçлет тĕк унта сĕрĕм тухатех. Хлорофитум унран та лайăх сыхлать.




ЧУНРИ

# Сансăрах...

Иксĕмĕр уйрăлнăранпа виçĕ çул та çитрĕ ĕнтĕ. Пĕрпĕрне çав тери юратрăмăр пулин те çулсем уйрăлчĕç. Ытла та тĕрлĕ кăмăллă пултăмăр-тăр – килĕштерейменĕмĕр.

Чунăмăрсенче темле йывăр пулсан та ыратăва чăтрăмăр. Уйрăм пурăнма вĕрентĕмĕр. Тепĕр чухне тунсăхланипе çĕрĕ-çĕрĕпе куç та хупмарăм пуль, хушăран упаленеупалене макăртăм та. Шăплăхра уру сассине шырарăм. Халь-халь алăк уçса кĕрессе кĕтрĕм... Çакă чунăма асаплантарни çеç иккенне пĕле тăркач...

Хама алла илме çăмăл пулмарĕ. Анчах чĕремри суран пирчеме вăй тупрех. Вăхăт сиплет теççĕ. Çук. Вăл чире ирттермест, ыратнине лăплантаракан эмел пек çеç. Ăна куллен ĕçетĕн те хăвна сывă туйма тытăнатăн. Анчах хушăран суран хăйĕн пирки аса илтеретех. Тепĕр чухне чĕре тĕпĕнчен туртса илет те кĕлетке тăрăх сивĕ чупса иртет. Аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче тĕнче кисреннĕн ăшăма пĕр хушă çил-тăвăл лăскать те часах лăпланать. Хура пĕлĕтсем сирĕлсен çĕре хĕвел çутатса ăшăтать. Пĕр вăхăта тавралăх уçă сывлăшпа тулать. Унпа кăкăр тулли антăхса киленетĕн. Шăрăхлатиччен.

Сансăр пурăнма вĕрентĕм эпĕ. Çăмăл пулмарĕ паллах. Малтанах эсĕ шăнкăравласса кĕтрĕм. Кайран тупăнасран шиклентĕм те. Лăпланма пуçланă ырату çĕнĕ вăй-халпа хĕмленесрен, туйăмсене тытса чараймасран хăрарăм.

Вăхăт иртнĕ май пĕчченлĕхпе туслашрăм. Час-часах калаçрăм унпа – шăплăхпа. Мана сансăр та аваннине вăл пăшăлтатрĕ те. Сан çинчен те, пирĕн юрату çинчен те сăмахларăмăр. Чуна усна çак калаçусенче хама ăнланма тăрăшрăм.

Юратнă-ши эпĕ сана? Ун чухне çав тери саватăп пек туйăнатчĕ. Халĕ хуравлама та иккĕленетĕп. Мĕне пĕлтерет-ши çак туйăм? Мĕнре палăрать-ши? Ăçта пытаннă-ши? Никам та каласа кăтартаймасть-тĕр... Çапла, сапла иксĕмĕре юнашар çав тери лайăхчĕ, чунăмăрсенче лăпкăччĕ, ытамсем ачашчĕ, чуптăву хĕрӳччĕ... Анчах ăнлану çукчĕ. Апла пулин те эсĕ маншăн çав тери хаклăччĕ. Унччен.

Пытармастăп: тепĕр чухне сана халĕ те аса илетĕп. Ахальтен мар хушăран чунăмра çумăр çăвать. Анчах малтанхилле тунсăхламастăп, сана курассишĕн антăхмастăп. Ахаль те телейлĕ эпĕ. Сансăрах.

**ЯНА.**

# Хамах айăплă

"Ир такăнсан – каçченех", – теççĕ ваттисем. Манăн пурнăçра та çавнашкалах пулса тухрĕ. Вунсакăр çултах качча тухса хамăн пурнăçа йăлтах пăсса хутăм. Айван пулнă çав, вĕренесси пирки те шухăшламан. Унран лайăх каччă тупаймасран хăрарăм-ши? Хĕр тантăшсене те кĕвĕçтерес терĕм пулмалла. Мишăна куç хывакан нумайччĕ. Кашнинпех лайăх калаçатчĕ вăл, анчах та киле мана çеç ăсататчĕ. "Вĕрен, качча кайма ĕлкĕретĕн. Çамрăклăх пĕрре кăна килет", – ăс паратчĕ атте-анне. Итлемерĕм. Уншăн никам та мар, хамах айăплă. Умлă-хыçлă ача çуратрăм. Упăшка Мускав тăрăх шапашра çӳрерĕ. Вăл мана епле суйнине тантăшăмран кайран кăна пĕлтĕм. Паллах, малтан ĕненес килмерĕ. Тĕрĕсех, Миша тăван тăрăха çитсен те киле васкаман иккен. Шупашкарта урăх хĕрарăм патĕнче чараннă. Пурăна-киле йăлтах çиеле тухать çав. Ик-виçĕ кунран тин яла çитетчĕ. Тунсăхланине пачах та туймастăмччĕ. Ыталамасть, ăшшăн та калаçмасть, ывăннă тесе хăвăртрах çывăрма кĕрсе выртать. Виç-тăватă çул çапла ултала пурăннă-мĕн мана. Хăпаймарĕ çав хĕрарăмран, икĕ ачана шеллемесĕрех пĕр кунхине ун патне куçсах кайрĕ.

Мĕнех, каякан çынна тытса чараймастăн, тепри манран лайăхрах пулчĕ-тĕр. Чавса çывăх та – çыртма çук. Аттепе анне тĕрĕсех каланă, вĕренсе алла професси илмеллеччĕ малтан. Халь мана ниçта та ĕçе илмеççĕ. Урам шăлма, кафере савăтсапа çума кăна юрăхлă эпĕ. Çывăхри районтан кашни кун хулана килсе ик-виçĕ ĕçре тăрăшатăп. Хĕллехи вăхăтра иртен пуçласа каçчен подъезд умĕсене шăлса такăрлататăп. Ачасене выçă лартаймастăн, ашшĕ килсе те курмасть. Алименчĕ те икĕвиçĕ пин тенкĕ кăна.

Пĕччен пурнăç мана та йăлăхтарчĕ. Хамран аслăрах арçынпа паллашрăм. Иккĕн çăмăлтарах пулĕ терĕм. Ачасене юратать вăл. Укçи-тенкине те хĕрхенмест вĕсемшĕн. Кинона та, канмалли кунсенче вăрмана шашлăк пĕçерме те илсе каять. Малтан мĕнле сисмен-ха эпĕ, вăл ĕçме юратнине кайран тин туйса илтĕм. Коля пĕрре "симĕс çĕлене" тутансан уйăхсăр та чарăнаймасть. Çав вăхăтра, каçарăр та, чипер, йĕркеллĕ арçын чăн-чăн вылăхха çаврăнать. Пĕр Турă кăна пĕлет эпĕ мĕн чăтса ирттернине. Тĕрĕссипе, вăл ӳсĕр чухне килте те çывăрса кураймастăп. Кашни арçын çумне хушса чуна тăпăлтарса кăларать. Эпĕ пĕçернĕ апат та, урай çуни те килĕшмест.

Ĕнер яшка çиме ларчĕ те, чĕлхине хытă пĕçертнĕрен мана тулли турилккепе печĕ. Пуçа шăтарнисĕр пуçне вĕри яшка пите те пĕçертрĕ. Иккĕмĕш эрне ĕнтĕ кӳршĕаршă тăрăх çывăрса çӳретпĕр. Ĕне хăш чухне сăвăнмасăрах кĕтĕве каять. Урăлма пĕлмен арçынна пулах утă та çителĕклĕ хатĕрлеймерĕмĕр кăçал. Аттепе аннене итлеменнипиех çавнашкал телейсĕр пултăм. Ял çинче те намăс. Пĕрре нушине тутанса курнă хыççăн теприне мĕншĕн çыхланмаллаччĕ-ши? Халь унран епле хăтăласси пирки кăна шухăшласа пурăнатăп. Манăн хам пурнăçăмра пĕр кун та пулин телейлĕ пулса курас килет. Тепĕр тесен, кам умĕнче айăпа кĕтĕм-ши? Çынна усал туса та курман пурнăçра. Урăх пĕр арçынпа та çыхланассăм çук. Вăтăр çулта çеç-ха эпĕ, халь те вĕренме кая юлман. Алла пĕр-пĕр специальноç илме шухăшларăм. Çĕнĕ пурнăç пуçлама нихăçан та кая маррине çак çула çитсен çеç ăнланса илтĕм. Пĕччен те хуçălмăп-ха. Чăваш хĕрарăмĕ темĕн те чăтма хăнăхнă. Ялан ăмăр çанталăк пулмĕ, хура пĕлĕтсем хыçĕнчен сар хĕвел шуса тухса йăл кулĕ-ха.

**НАДЕЖДА.**
Муркаш районĕ.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Тĕлĕк

Иштулпа Пинерпи хĕрĕх çул ытла пĕр-пĕринпе çав тери килĕштерсе пурăнаççĕ. Вĕсен килĕнче чашăк-тирĕк шăкăртатни те пулман ахăр. Пулсан та тулалла кăларман тен. Вĕсен ачисем те çитĕнсе саланчĕç. Кашни /вĕсем улттăн/ хăйĕн çемйипе пурăнать. Тĕп килте Иштулпа Пинерпи иккĕшĕ кăна юлчĕç. Ватăлас енне кайнă пулсан та вылькăх усраççĕ: икĕ качака, сысна, чăхсем пур. Çулсеренех виçĕ-тăватă сысна пусаççĕ, ашне сутаççĕ. Пĕрне хăйсем валли хăвараççĕ. Хĕл хырăмĕ аслă. Ывăлĕпе кинĕсене те, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсене те ашпа пулăшаççĕ. Пĕр сăмахпа, начар мар пурăнаççĕ Иштулпа Пинерпи.

Пĕрре çапла пирвайхи юр ӳксен пĕр сыснине тытса пусрĕç те тăватă пая уйăрса кĕлете çакса хучĕç. Каçхине Иштулпа Пинерпи çывăрма выртрĕç. Нумай çывăрнă-и, сахал-и, Иштул хыттăн кăшкăрса вăранса кайрĕ:

– Карчăк, мĕн хăтланатăн, ăсран тайăлтăн-и? Мĕншĕн мана çыртатăн? Мĕн пулчĕ сана?

– И-и-и, Иштул, каçар ĕнтĕ, эпĕ сана çыртса илтĕм-и? – вăранса кайрĕ Пинерпи те. – Эпĕ тĕлĕк курса выртатăп. Пирĕн аша вăрлама килнĕ пек. Виçĕ татăкне илсе тухнă та çуна çине хунă. Тăваттăмĕшне сĕтĕреççĕ пек кĕлетрен. Эпĕ пырса тăпăлтарма тытăнтăм, мана чышса ячĕç. Сиксе тăрса юлашкинчен хăть салине те пулин çыртса илес терĕм те – эсĕ кăшкăрнипе вăранса кайрăм. Эпĕ сан хулпуççине çыртса илнĕ иккен тĕлĕкре. Юри мар вĕт ĕнтĕ. Иштул, каçар мана уншăн.

Иштул, çилли килчĕ пулин те, ыратнине пăхмасăр арăмĕпе пĕрле кулса ячĕ. Çавăн пек мыскарашăн Пинерпие каçарчĕ те мăшăрне ыталаса илчĕ.



**Виктор СИМАКОВ.**

АХ, АНЧАХ...

# Пĕччен мар

Шкулта вĕреннĕ чухне мана хамран аслăрах каччă Дима килĕшетчĕ. Куçĕ çутă пĕлĕт пекех кăвакчĕ, кулли питĕ илемлĕччĕ. Ун пек каччăна мĕнле килĕштермĕн? Шкулти мĕнпур хĕр Димăна юрататчĕ. Мана вара вăл пачах та асăрхамастчĕ. Чăнах та, пит шатраллă, çӳçĕм лăпăс-лапăс кăтра. Анчах та эпĕ çапах хамăн ĕмĕт пурнăçланасса шанаттăмччĕ.

Хĕлле Димăна салтака илсе кайрĕç. Эпĕ çав çул 11 класс пĕтертĕм те хулари техникума çул тытрăм. Çĕнĕ тус, кăмăла каякан каччă питĕ нумайччĕ. Общежитири пӳлĕмре виççĕн пурăнма тытăнтăмăр. Вĕренӳ çинчен шухăш та пулмарĕ малтанхи уйăхсенче. Кашни каç каçхи клуба çӳреме пуçларăм. Унта çĕнĕрен çĕнĕ каччăпа паллашаттăм. Пит çинчи шатрасем çухалчĕç, кăтра çӳçĕме хитре пуçтарма вĕренсе çитрĕм.

Пĕррехинче Димăран смс-çыру çитрĕ: "Мĕнле пурăнатăн-ха? Эсĕ питĕ хитреленсе кайнă". Савăнтăм, хамăн куçа хам ĕненменнипе çырăва хĕрсене те кăтартрăм. Тĕрĕсех иккен, ман пата Дима çырса янă. Шкулта чухне ман çине çаврăнса та пăхмастчĕ, халĕ ав еплерех шăрçаланă. Хирĕç хуравларăм: "Аванах, хăв мĕнле? Тавах". Çавăн пек пуçланчĕ те пирĕн калаçу. Ытти каччă çинчен шухăшлама та пăрахрăм, Димăна кĕтме шантартăм.

Çулталăк хăвăрт иртсе кайрĕ. Дима та салтакран килчĕ. Еплерех савăнтăм эпĕ. Кашни каçа пĕрле ирттереттĕмĕрччĕ. Вăл хăйне питĕ ирĕклĕ тытатчĕ, эпĕ вара унран вăтанаттăм. Кĕтмен çĕртен хутшăнусене сивĕлĕх çапрĕ. Эпĕ сăлтавне пĕлеймерĕм. Сасартăк савни ман пата çырма та, шăнкăравлама та пăрахрĕ. Çухалчĕ. Тепĕр виçĕ кунтан Дима авланасси пирки илтрĕм. Мĕнле? Кама качча илет? Апла та пулать-и-ха тĕнчере?

Нимĕн ăнланайманнипе ухмаха тухатăп пуль тесе шухăшларăм. Халь кăна пĕрлеччĕ вĕт-ха, пире питĕ лайăхчĕ, мĕншĕн мана çавнашкал хăтланчĕ-ха вăл? Светăпа, тантăш хĕрпе, калаçса пăхас терĕм.

– Эсĕ мĕн, пĕлмен-им? Вăл кӳршĕ ялти Катьăпа тахçанах çыхăну тытать, лешĕ унран ача кĕтет, – терĕ.

– Мĕн? Хăш вăхăтра тĕлпулма ĕлкĕрнĕ-ха вĕсем? – ăнланаймарăм эпĕ.

– Дима яла отпуск вăхăтĕнче килнĕччĕ, çавăн чухне Катя илĕртнĕ те ăна.

Эпĕ çухалсах кайрăм. Кăмăл хуçăлчĕ, чĕре хыттăн тапма пуçланине туйрăм. Эпĕ хама сăмса йĕри-тавра çавăрттарма ирĕк патăм апла.

Хĕллехи уявсем хыççăн техникума çитрĕм. Никампа та калаçас килмерĕ. Библиотекăран тухмасăр вĕренме пуçларăм. Лайăх палласем илме тытăнтăм.

Пĕррехинче манпа юнашар пĕр каччă пырса ларчĕ. Эпĕ те ăшшăн калаçрăм. Мана вăл пĕрремĕш курсрах асăрханă иккен, эпĕ вара Димăсăр пуçне никам çине те пăхман. Матвей вулавăшран тухсан мана кафене илсе кайрĕ. Эпир пиллĕкмĕш уйăх пĕрле ĕнтĕ. Матвей ман çине кашни кунах ăшă куçпа пăхать. Пушă вăхăта пĕрле ирттеретпĕр. Эпĕ те пĕччен мар.

**Ольга П.,**
**ЧПУ студенткки.**

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

**Хисеплĕ "Чăваш хĕрарăмĕ" редакци!** Сирĕн хаçата кашни эрнере ирхи хĕвеле кĕтнĕ пек кĕтетĕп. "Чăваш хĕрарăмĕ" пулăшнипе чăваш арçыннисем хăйсен телейне тупнă тĕслĕх чылай. Эпĕ те шыраса пăхас тетĕп. Хам пирки: 43 çулта, Шупашкарта пурăнатăп, ялта çурт пур. Эпĕ мĕнле çын пулнине, мĕн пултарнипе-пултарайманнине пĕлес текен, пурнăçра телейне тупайман хĕрсен, хĕрарăмсен шăнкăравĕсене чăтăмсăррăн кĕтетĕп.

**Телефон номерĕ редакцире.** **ВАЛЕРА.**



Роза ШЕВЛЕПИ

# Линда

/Калав/

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.**

* * *

Пурте тĕлĕнчĕç ку йытăран. Вăл çак шавлă ачасене сыхласа-упраса тăрасси хăйĕн тивĕçĕ тесе ăнланчĕ пулĕ. Кам та пулин ачасем ушкăнпа вылянă çĕре пырса тухтăр кăна, вăл хыттăн вĕрме тытăнать е харлатса илет.

Ачасем хăйсен çакнашкал тусĕ тупăннăшăн чунтанах савăнаççĕ. Чи пысăк савăнăç, чи асра юлнă кун – йытă йăвинче унăн çурисем сас пани пулчĕ. Пилĕк çура!

Йытă патĕнчен ача-пăча татăлмарĕ. Вĕсем кунĕпе черетлĕн йытта, унăн çурисене пăхса тăчĕç. Кам та пулин кӳрентересрен хăрарĕç. Пĕррехинче пĕр çапкаланчăк йытă пырса тухнăччĕ. Линда ăна питĕ хаяррăн хăваларĕ. Çапла пулнă хыççăн ачасем йытта пушшех те тимлĕрех сыхлама тытăнчĕç.

Кун хыççăн кун шурĕ. Çу кунĕсем питĕ ырă тăчĕç. Ырă çанталăка пула ача-пăча шавĕ кашни кунах ир пуçласа каçченех картишĕнче янăрарĕ. Шел те, ача сассине юратман çынсем те тĕл пулкалаççĕ.

Пĕрремĕш хутра пĕччен пурăнакан Плаки кинеми темиçе хутчен те тухса хăтăрчĕ:

– Мĕн эсир, килсĕр-çуртсăр-и? Кунĕпе урамра. Аçуаннĕ те пăхмасть сире! Ан шавлăр! Сирĕн шава итлесе хăлха ыратакан пулать! Килне кĕрсе шавлăр! Халех кайăр кунтан!

Плаки çиллине ниепле шăнараймарĕ. Юлашкинчен çак шавăн сăлтавĕ картишĕнче йытă йăви пулни тесе хăйне ĕнентерчĕ:

– Кур-ха эсĕ вĕсене! Килте усрасшăн мар хăйсем, кунта тĕркĕшеççĕ, пĕр канăç памаççĕ. Эп сире ак кăтартăп-ха! – чышкипе юна-юна хăйпе хăй вăрçăнчĕ вăл.

* * *

Çанталăкĕ питĕ ырăччĕ вăл кун. Вырсарникун. Ирхине кăшт ытларах сывăрма та юрать.

Анчах Витя паян ирех тăчĕ. Линдăна, унăн çурисене пăхма черет çитнĕ унăн. Ирех тăчĕ те балкон çине тухрĕ, аякран йытта сăнарĕ.

Ак хайхи, мĕн ку?.. Леш пĕрремĕш хутра пурăнакан хаяр Плаки кинеми йытă йăви патĕнче харкашать. Ним тăвайман енне йытта вăрçать.

Линда ăна хирĕç ытла вĕрсе шавламарĕ, йăвинчен пуçне кăларчĕ те шăлĕсене кăтартса харлатса илчĕ. Кинеми вара васкасах пăрахса кайрĕ. Анчах каллех, йытă çине çаврăна-çаврăна пăхса, хăйĕн яланхи сăмахĕсене каларĕ:

– Кăтартатăп-ха эп сире! Картишĕнче урнă йытă усраççĕ!..

* * *

Плаки кинемирен пурте тĕлĕнетчĕç. Çынна юратман ватă пулнă вăл. Çулсем иртнĕçемĕн ватă çынсем кăмăлĕпе çемçелсе пыраканччĕ. Плакин çулĕсем хушăнса пынă май усаллăхĕ, чунсăрлăхĕ ӳссе пырать темелле-ши вара? Çамрăксене, ача-пăчана пĕтĕм чунтан кураймасть вăл. Харпăр хăй ача ӳстерсе курнă çын унашкал пулмастех. Халăхра усал кăмăллă çынсене пилсĕр теççĕ. Плаки шăпах çавăн пек çын пулса тухать те.

* * *

Йытă хăйне хирĕç çапла харлатса илни Плакие питĕ тарăхтарса ячĕ. Çав самантра вăл ниепле те манаймарĕ. Тепĕр кунне те çиллине шăнараймарĕ. Çав хушăрах Плаки хăй кăна йытта йăвинчен кăларса яма пултарассине, çурисене туртса илме пултарассине шанмарĕ. Çавăнпа урăх май шырарĕ:

– Ара, манăн милицие кăна шăнкăравламалла-çке! Наччас килсе илсе каяççĕ. Е леш çапкаланчăк йытăсене тытса каякансем патне. Вĕсем йĕрке тăваççех! Атту кунта çак урнă йытă патĕнче кунĕпех ачасем аппаланаççĕ: апат çитереççĕ, çурисемпе выляççĕ.

Йытă ачасене пĕрре те сивлеменни тĕлĕнтерчĕ кинемие. Çурисене те алла илме ирĕк парать иккен. Плаки хăйпе хăй калаçса-вăрçăнса çӳрерĕ:

– Таса мар йытă çумĕнче кунĕпе аппаланаççĕ, таса мара пухаççĕ ачисем! Ашшĕ-амăшĕ пур-ши вĕсен? Е пачах та ачисене пăхмаççĕ вĕсем!

* * *

Миçе хутчен милици уйрăмне шăнкăравламарĕ пулĕ Плаки. Миçе хутчен йытăсене тытса каякан машина килмерĕ пуль картишне. Анчах кашнинчех – ăнăçсăр.

Ăçтан кăна сисетчĕç пулĕ ачасем Плаки ăçта та пулин шăнкăравланине, йытта, унăн çурисене тытса кайма пултарассине.

Тахăш самантра йытă йăви пушанатчĕ. Ачасем çурасене пĕр хăрассăн пĕр-пĕрин хушшинче пайлатчĕç-валеçетчĕç те çухалатчĕç. Амăшне пытараканĕ те пурччĕ. Никам та йытăпа çурисем ăçта кайса кĕнине пĕлместчĕ. Машинăпа килнĕ çынсем Плакие ятла-ятла каялла çул тытатчĕç, ăна пули-пулмипе ĕçрен татнăшăн тарăхатчĕç.

Нумаях та вăхăт иртместчĕ – Линдăпа çурисем каллех хăйсен кĕтессине таврăнатчĕç.

Паян та çаплах пулчĕ. Ачасем каллех йытă йăви патĕнче кĕшĕлтетме тытăнсан Плаки васкавлăн телефон патне пычĕ, шăнкăравласа йытăпа çурисем каллех йăвара иккенне пĕлтерме шухăшларĕ, анчах хирĕç тарăхса калаçнине илтрĕ:

– Эсир вăйă выляма пăрахатăр-и, çук-и? Çитет ача вăййи выляса. Кунта ĕçсĕр аптраса ларакансем çук!

Кӳренчĕ Плаки. Темччен телефон кĕнекине уçкаласа ларчĕ, милици уйрăмĕнче ларакан ĕçлеме юратман çынсем çинчен аслăраххисем патне мĕнле шăнкăравласа çăхав памаллине пĕлесшĕн пулчĕ. Министрпа та çыхăнасшăнччĕ, анчах унтан пуçлăх вырăнта çуккине пĕлтерчĕç.

Хăйне ниçта та тĕрĕслĕх тупма шанчăк çуккине ĕнентерчĕ те Плаки, çиллине шăнараймасăр саспах вăрçăнса çӳрерĕ:

– Пурте пĕр шуйттан! Пĕри те ĕçлесшĕн мар!

* * *

Картишĕнчи ачасем пурте халичченхинчен те тимлĕрех пулчĕç, яланхи пекех черетлĕн йытă йăвине хураллерĕç. Линда çурисем питĕ маттур çитĕннишĕн савăнчĕç. Вĕсем амăшĕ пекех чипер. Апла пулсан, вĕсем валли хуçа тупас ыйту çăмăллăнах татăлма пултарать. Пули-пулми алла парасшăн мар-çке вĕсене.

* * *

Вăхăт васкани, васкатни ачасене хумхантарчĕ. Кĕçех шкула кайма вăхăт çитет.

Тем тĕрлĕ шухăш тертлентерчĕ ачасене. Çурисене салатсан Линдăна хăш те пулин яланлăхах, унăн хуçи пулса, килне илме май пуррипе çуккине те сӳтсе яврĕç. Анчах Линда ирĕкре çитĕннĕ, хула хваттерĕнче пурăнма ăна питĕ йывăр пулать. Тен, пурăнаймасть те... Çăлăнăç кĕтмен çĕртен тупăнчĕ.

Витя кукашшĕ ялтан хăнана килнĕччĕ. Мăнукĕ ăна Линда çинчен, унăн шăпи çинчен, ачасем пурте пĕрле йытă çемйине мĕнле пăхсаупраса тăни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Тимлĕ итлерĕ кукашшĕ Витяна. Кайран мăнукĕпе пĕрле Линдăпа паллашма та тухрĕ. Линда пĕччен мар иккен. Ун çумĕнче пĕр çури йăраланать. Вăл питĕ ачаш, амăшĕнчен пĕр утăм та юласшăн мар.

* * *

Ачасен ушкăнĕ, вĕсем çапла туслă пурăнма пĕлни Витя кукашшĕне тĕлĕнтерчĕ, савăнтарчĕ. Вăл хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерес терĕ:

– Ачамсем, эсир мана Линдăна яла парса яма пултаратăр-и? Сире те, ăна та çăмăлрах пулмĕ-ши?..

Чи малтан Витя кукашшĕпе килĕшнине пĕлтерме васкарĕ. Хăй ыйтуллăн Гриша çине пăха-пăха илчĕ. Гриша та килĕшет иккен. Пурте килĕшеççĕ.

– Ан кулянăр. Сирĕн тусу ял пурнăçне килĕштерессе шанатăп. Питĕ аякра мар, килсе те курăпăр.

* * *

Линдăпа уйрăлнине картишĕнчи ачасем яланлăхах астуса юлчĕç.

Витя ашшĕ картишне хăй машинипе килсе çитсен пурте ун тавра пуçтарăнчĕç. Малтан машинăна Витя кукашшĕ кĕрсе ларчĕ. Ачасем Линдăна ун çумне вырнаçма хистерĕç. Йытă малтан аптраса тăчĕ. Унтан ăна Витя кукашшĕ хăй патне чĕннине ăнланчĕ, унăн аллинчен тутлă кучченеç илме хирĕç пулмарĕ. Юлашкинчен ун çумнех кĕрсе вырнаçрĕ. Ачаш çури, амăшĕнчен юласран хăранăскер, çинçе сасăпа нăйкăшрĕ. Тахăшĕ ăна та амăшĕ çумне тĕршĕнтерчĕ. Айванкка ним вăтанмасăр амăшне хăйĕн ĕмес килнине пĕлтерчĕ. Пурте ахăлтатсах кулса ячĕç.

Витя кукашшĕ Линдăна ăшшăн ачашларĕ, хăй çумне пăчăртарĕ. Йытă хăй пурнăçĕнчи улшăнусене йышăннине пĕлтерчĕ пулĕ, пĕрре те хирĕçлемерĕ. Машина алăкĕсем хупăнсан та лăпкăн кăна ачасем çине тинкерчĕ.

Мĕнле шухăшсем вылярĕçши çак самантра йытă ăсĕнче? Нихăшĕ те пĕлмест. Йытă-кушак пирĕн шухăшсене çăмăллăн вулама пĕлет теççĕ-çке. Вăл тĕрĕсех пуль. Эпир кăна вĕсен шухăшне вулама пултараймастпăр. Питĕ шел...

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

Маргарита ПРОКОПЬЕВА

### Салтак ячĕ вилĕмсĕр

Манăçмасть тăван пичче,
Йывăр чул чĕре çинче.
Пуçне хучĕ чиккĕре,
Юлчĕ çирĕм иккĕре.
Тертлĕ пулчĕ ун кун-çул,
Чарăнмасть юхма куççуль.

Украина çĕрĕнче,
Ешерсен çурхи тĕнче,
Тернополь çывăхĕнче
Тăнă çар хĕсметĕнче.
Лăпкă мар-çке самана –
Кĕртмелле мар тăшмана.

Çĕрпе пĕлĕт çуннă кун,
Тăхлан çумăр çунă чух,
Пĕр хаяр çапăçуран
Чĕррĕн тухайман тăван.
Çулăм хыпнă ун танкне,
Хунă паттăрла пуçне.

Ма пӳрмен шăпа телей?
Пурнаймарĕ – питĕ шел.
Тĕлĕкре халь курăнать,
Чĕрĕ-сывă туйăнать.
Вăрçă паттăрĕн ятне
Манмĕç Тикашпа Кĕтне.

### Çĕнтерӳçĕ-салтака ĕмĕрлĕх мухтав

Капланнă çилĕпе салтак çĕкленчĕ
Çĕршыв чĕнсен хаяр çапăçăва.
Тискерлĕхе куçпа курса ĕненчĕ,
Вăй-халĕ çитĕ хускатма тăва.

Вутра çунсан та чăтрĕ кĕлленмесĕр,
Çĕршывшăн тăкрĕ вĕрекен юнне.
Хăй пурнăçне ним чухлĕ шеллемесĕр,
Салтак çывхартрĕ Çĕнтерӳ кунне.

Вăрçа çĕре çыртса кашни ылханчĕ,
Пĕр айăпсăр çынсем куçне хупсан.
Фашизмăн ирсĕр ĕмĕчĕ путланчĕ,
Хĕçпе килсе хăй вилĕмне тупсан.

Çĕршыв ирĕклĕхне çăлса хăварчĕ,
Салтак çапса салатрĕ Берлина.
Çĕнтерĕве туптарĕ вут-кăварлăн,
Тĕпрен арканчĕ рейхстагри стена.

Çĕнтерӳвĕн хакне асра тытатпăр.
Мăнаçлăн вĕлкĕшет хăмач ялав.
Пуç хунисемшĕн çуртасем çутатпăр,
Уявшăн вăрçă паттăрне мухтав.

Вăрмар районĕ.

# «Çăлтăр чирне» ачасем мĕнле чăтаççĕ?

### Кристиан Бэйл

Голливуд Бэтменĕ, “Оскара” тивĕçнĕскер, пĕрремĕш хут “Анастасия: Тайна Анны” фильмра 12 çулта ӳкерĕннĕ. 1987 çулта вара чăннипех чапа тухнă – 13-ри арçын ача Стивен Спилбергăн “Империя солнца” ĕçне хутшăннă. Унта выляма ăна 4000 арçын ача хушшинчен суйласа илнĕ. АПШ кинокритикĕсене те питĕ килĕшнĕ Бэйл сăнарĕ – уншăн вăл Наци канашĕн сумлă премине тивĕçнĕ.

Телее, Бэйл ашшĕ-амăшĕ тĕрĕс тактика суйласа илнĕ – вĕсем ачин чапĕпе усă курса укçа ĕçлесе илес темен. Çавăнпах ăна кăсăклă рольсем кăна суйлама пулăшнă.

### Натали Портман

“Оскара” тивĕçнĕ Натали 12 çулта чапа тухнă – Люк Бессонăн “Леон” фильмĕ хыççăн. Çамрăк актриса сăнарĕ ыттисемшĕн кĕçех канон пулса тăнă: каре, йывăр пушмак, мăй çинче – хура хăю. Тӳрех ыйту çуралать – ашшĕ-амăшĕ мĕнле майпа ирĕк панă-ха ăна? Аран-аран! Кастинга хутшăнмашкăн Натали вĕсенчен аран ирĕк ыйтса илнĕ. “Леон” фильмра Матильда ролĕнче выляма кастинга 2000 хĕрача хутшăннă. Портман-аслисем вара контракта хăйсем ыйтнипе улшăнусем кĕртсен кăна алă пусма килĕшнĕ. Ытларах ку сигаретпа çыхăннă сценăсене пырса тивнĕ – Наталие вĕсене хутшăнма чарнă.

“Леон” хыççăн хĕрача çăлтăра çаврăннă, анчах та пурнăçран пыл тути кĕмен – журналистсем унăн кашни утăмне сăнанă. Çавăн пекех шкулта та çăмăл пулман çамрăк актрисăна – тантăшĕсем кĕтмен çĕртен чапа тухнă хĕр енне çурăмпа çаврăннă.

### Дрю Бэрримор

Америкă сцени çинче XIX ĕмĕртех хуçаланнă Бэрриморсен йăхĕнчен тухнă Дрю урăх мĕнле çулпа кайма пултартăрха? 11 уйăхра вăл рекламăра ӳкерĕннĕ. 5 çулта пысăк кинона хутшăннă. 6-ра вара чапа тухнă. Хресна ашшĕ Стивен Спилберг ӳкернĕ “Инопланетяне” фильмра Дрю пиччĕшĕсене ют планета çинчен килнĕ чĕрчуна пытарма пулăшакан Гертие вылять. 8-та вара Дрю Стивен Кингăн “Порождающая огонь” фильмĕнче тĕп сăнар калăплать.

Шел те, ирех килнĕ чапа çăмăллăн чăтса ирттерейме Дрю. Аслисем те, вăхăта савăнăçлă ирттерме хăнăхнăскерсем, ача çуралсан пурнăçĕсене улăштарас темен. Бэрримор-кĕçĕнни 11 çултах туртма та, ĕçме те хăнăхнă. 13-ре Голливудри паллă чи çамрăк наркоманка пулса тăнă. Хĕрача унта та кунта çĕклекен шăв-шава тепĕр ирех МИХсем тĕнчипех сарнă. 14-ра Дрю хăй çине алă хума тăнă хыççăн реабилитаци клиникине çакланать. Çакăнта кăна урăхларах та пурăнма май пуррине шухăшласа илет. 16 çула çитсен ашшĕ-амăшĕн опекине вăйпах пăрахăçлаттарать. Каярахпа актер пултарулăхнех аталантарать.


БЭРРИМОР.


ХАРАТЬЯН.

### Джоди Фостер

Джоди иккĕре рекламăра ӳкерĕннĕ, улттăра – телесериалта. Пысăк кинона лекиччен Фостер еткерĕнче икĕ теçетке роле яхăн пулнă. 12 çула çитсен вăл Мартин Скорсезен “Алиса здесь больше не живет” фильмĕнче Одри вăрра вылянă. Икĕ çултан çав режиссерах ăна “Таксист” фильмра çамрăк проститутка Айрис рольне сĕннĕ. Ӳкерме пуçличчен тĕп сăнара калăплаканăн 4 сехет психиатрпа калаçма тивнĕ. “Таксист” пурнăçăма тĕпрен улăштарчĕ, – тенĕ каярахпа актриса. – Актер ĕçĕ чун турамĕ кăна мар, йывăр ĕç пулнине шăпах çавăн чухне туйса илтĕм”.

Анчах та ку ĕç чап кăна мар, кăткăслăхсем те кăларса тăратнă. Джон Хинкли, фильмри Айриса юратса пăрахнăскер, ултă çул актриса хыççăн йĕрленĕ. Вĕçĕмсĕр шăнкăравланă, çырусем çырнă, тĕлпулу шыранă. Джоди хирĕçленине илтесшĕн те пулман. Хĕр парăнманнине кура арçын кинори сюжетпах усă курса унăн чунне тыткăнлама тĕв тунă. Фильмра Трэвис Бикл сенатора вĕлерме тăрать. Хинкли унран та маларах каять – вăл Америка президентне суйлать, ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тĕллевпе Рональд Рейгана пăшалтан перет. Патшалăх ертӳçине тата унăн хуралçине амантать. Юрать-ха çакă актриса карьерине начар витĕм кӳмест. Халĕ “Оскара” – икĕ хут тата “Ылтăн глобуса” тивĕçнĕскерĕн пухматĕнче – 40 роль. Унсăр пуçне режиссура енĕпе те тĕрĕсленĕ хăйне вăл.

### Леонардо Ди Каприо

Кинематографие вăл та çав сукмакпах утнă: реклама, ачапăча телекăларăмĕсем... Чăн та, тепĕр чухне ӳкерӳ лапамĕнче вăрах тытăнса тăрайман самантсем те пулнă – арçын ачана ашкăннăшăн кăлара-кăлара янă.

Актер пулма çирĕп шухăш вăл 14 çулта тытать. Ашшĕ-амăшĕ ывăлĕ валли агент тупать. Анчах та лешĕ усăллă канаш пама та пĕлмен. Сăмахран, ятне улăштарма сĕннĕ – Ленни Вильямс. Анчах та телекуравра палăрма пулăшнă çапах та. Ди Каприо “Изгои” фильмра ӳкерĕннĕ. Ун чухнех Тоби Магуайрпа паллашнă. “Санта-Барбара” телесериалта та ӳкерĕннĕ Каприо – çамрăк Мэйсон Кэпвелшăн премие тивĕçнĕ. “Жизнь этого парня”, “Что гложет Гилберта Грейпа?” фильмсем карьерине ăнăçлă аталантарма пулăшнă. Икĕ ĕçĕ те экрансем çине Каприо 19 тултарсан тухнă. Каярахри ĕçĕсем те паллă: “Ромео и Джульетта”, “Титаник”, “Пляж”, Спилберг, Скорсезе патĕнчи рольсем... Кăçал пиллĕкмĕш теçеткене ярса пуснă Ди Каприо – Голливудри чи ăмсанмалли хусах, чи пултаруллă актерсенчен пĕри. Çав вăхăтрах Артистсен киноакадемийĕ ăна темшĕн питĕ юратмасть – “Оскар” илме пилĕк хутчен тăратнă пулин те пĕрре те паман.

### Линдси Лохан

Тахçан Линдси сарă-хĕрлĕ çӳçлĕ хĕр пĕрчи пулнă. Шкулта гимнастикăпа, юрлассипе, ишессипе аппаланнă, питĕ лайăх вĕреннĕ. Виççĕри Линдси модель агентствипе килĕшĕве алă пуснă, шучĕ те çук рекламăра ӳкерĕннĕ. 10-ра сериалра, çулталăкран паллă фильмра вылянă – “Ловушка для родителей” фильмра харăсах икĕ роль калăпланă: йĕкĕрешсене. Çапла туххăмрах чапа тухнă. Кĕçех çăлтăрачаран драма королеви пулса тăнă: “Чумовая пятница” тата “Дрянные девчонки” ĕçсенче ӳкерĕннĕ.

Шел те, Лохан чапа чăтайман. Актрисăн пуçĕ çаврăнма тытăннă. Паян ун çинчен ырă сăмах калакан çук, ĕçкĕ-çикĕпе çыхăннă шăв-шава тата ашшĕпе судлашнине кăна аса илеççĕ. Юлашки вăхăтри рольĕсем те пĕлтерĕшлĕ мар.

### Кристофер Уокен

Ронни /ку унăн чăн ячĕ/ телекăларăма 11 çулта ăнсăртран лекнĕ. 15-ре Уокен театрта та, циркра та ĕçленĕ. Ятне вăл ӳссе çитсен, юлташĕсем сĕннипе, улăштарнă. Халĕ 72-ри актер пухматĕнче 100 ытла роль. Вăл вара чарăнма шухăшламасть те. 2015-16 çулсенче вăл хутшăнакан 6 фильм тухмалла проката.

### Райан Гослинг

Райан карьерине 12 çулта 15000 конкурента хыça хăварса “Микки Маус клубĕнче” “мышкетертан” пуçланă. Киле таврăнсан ăна тӳрех телесериала чĕннĕ. 18 çулта каччă Çĕнĕ Зеландие çул тытнă. Унта “Геракл çамрăклăхĕнче” ӳкерĕннĕ. Черетлĕ ĕç – неонацист – малашлăхри çул-йĕре палăртнă: ирĕклĕ кино тата кăсăклă, кăткăс рольсем кăна. Паян та вăл çакăнтан пăрăнмасть.

### Кристина Орбакайте

Совет Союзĕнче те çăлтăр ачасем пулнă. Цирк артисчĕн тата Раççей эстрадин примадоннин хĕрĕ телекамера умне чи пĕрремĕш хут çиччĕре тăнă – “Веселые нотки” кăларăмра “Солнышко смеется” юрра шăрантарнă.

11 çулта вара пысăк кинора ӳкерĕннĕ – “Чучело” фильма, паллах, кашниех астăвать. Чăн та, ку ĕçе ӳкерме пĕрре те çăмăл пулман. Режиссер Ролан Быков Горбачев патнех çитнĕ. Тĕп сăнарта выляма пултаракана шыраса та хăшкăлнă – кастинга пĕтĕм Совет Союзĕнчен 17000 хĕрача хутшăннă.

Фильм проката тухнипе пĕрлех чап та çитнĕ, анчах Кристина çакна туйман та. “Эпĕ капла та паллă çын ачи пулнă вĕт”, – тенĕ вăл. Орбакайтешĕн ку роль трамплин кăна пулнă. Чăн та, вăл музыка сценине суйласа илнĕ. Анчах ку ăна хушăран экрансем çине тухма чармасть /Александр Стриженовăн “Любовь-морковь” ĕçĕ мĕне тăрать/.

### Дмитрий Харатьян

Раççей тĕп гардемаринĕсенчен пĕри кинона ăнсăртран лекнĕ. Ăна актриса пулма ĕмĕтленекен паллакан хĕрача Галя кастинга чĕннĕ. Гальăн ĕмĕчĕ пурнăçланайман. Димăна вара роль калăплама шаннă. Малтанах фильм ăнăçăвне никам та шанман “Розыгрыша” 1976 çулта 30 млн çын пăхнă! Çапла Харатьян чапа тухнă.

Шкул хыççăн арçын ача ашшĕ-амăшĕн тĕслĕхĕпе инженер çулне мар, Щепкин училищине суйласа илнĕ. Çав хушăра кинора ӳкерĕнме пăрахман. Ĕçĕсем мĕн тери! “Гардемарины”, “На Дерибасовской хорошая погода”, “Мордашки”... Çамрăк актерăн пуçĕ çак чапа мĕнле чăтса ирттернĕ-ши? “Çаврăнатчĕ, паллах, анчах темĕнле майпа вырăнтах юлчĕ”, – кулнă каярахпра Харатьян.

**/«Афиша@Mail.ru»/.**



Самолетпа вĕçекен стюардессăран парашют ыйтать. Лешĕ хăйсем пассажирсене ун пек япаласене паманнине пĕлтерет.

– Анчах та карапсем çинче çăлав жилечĕсем параççĕ-çке, – парăнмасть пассажир.

– Эпир сирĕнпе тинĕсре мар вĕт-ха, – хирĕçлет стюардесса.

– Тепĕр тесен, – тарăхсах калять пассажир, – пирĕн хушăра ишме пĕлекен ытларах ахăр, вăт вĕçме пĕлекен вара çукпа пĕрех!

* * *

Сирĕн çинчен такам усал шухăшлать-и? Ан кулянăр. Эсир ун çинчен тата япăхрах шухăшлама пултаратăр.

**☺И-ХИ-ХИК☺**

* * *

А и с т хăйне валли шапа çури илсе килнĕ пулĕ теннĕччĕ те симĕс чĕрчун... Йăнăшнă иккен...

* * *

Хĕрĕ амăшĕ патне çыру çырать: "Каççерен хамăн юратнă пинг-понгпа айкашатăп..." "Китаеца суйласа илни темех мар, – çитет кĕçех хурав, – çынни кăна лайăх пултăр".

* * *

Хĕрлĕ хунарлă çуртра пĕр арçын нумай пулмасть кăна авланнă юлташне асăрхать.

– Мĕн, çемьеллĕ пурнăç йăлăхтарчĕ те-им?

– Çук-ха, – хуравлать лешĕ. – Ирхине вăрантăм та савăшас кăмăл çуралчĕ. Арăм çине пăхрăм та вăл вара тин çуралнă ача пек мăшлаттарса çывăрать. Вăратма шел пулчĕ. Тепĕр тесен, çав 30 долларшăн юратнă мăшăр ыйхине татмаллаччĕ-и-ха?

* * *

"Йăлт асуна хывнă" тени пирĕн çĕршывра амăшĕ ачине вăрçнине пĕлтерет...

* * *

Маршрутка хыççăн чупнă май такăнтăм та кўлленчĕке кĕрсе ўкрĕм. Юнашарах арçын иртсе пырать. "Мĕн, ишсе хăвăртрах çитĕп терĕн-и?" – пулăшас вырăнне шăл йĕрет хайхи.

* * *

Хăрушă ўкерчĕк. Эсĕ урамра тăратăн. Лăпкăн. Никама та тĕкĕнместĕн. Хирĕçех полици ĕçченĕ тăрать. Тем чăмланă майăн сылтăм ывăç тупанне хыçать...

* * *

Ирхине вырăн çинчен çĕкленнĕ май сылтăм урупа такамăн сулахай алли çине пусса лартрăн тăк – ырра мар: паян татах ĕçме лекет...

* * *

Хĕрарăмсем Хĕл Мучирен çаплах йĕркеллĕ арçын ыйтаççĕ. Узбекистан тата союзла ытти республикăсен çурри куçрĕ ĕнтĕ пирĕн пата. Хĕрарăмсене вара çаплах тем çитмест...

* * *

Машина туяннипе паян никама та тĕлĕнтереймĕн. Вăт кредит çуккипе тесен...

* * *

– Вовочка, эсĕ ĕнер мĕншĕн шкула килмен?! – пăсăрлантарать амăшĕ Вовочкăна.

– Вĕрентекене парне туса парас терĕм.

– Мĕн парни тата?

– Ара, ĕнер унăн çуралнă кунччĕ те, кантăр терĕм манран.

* * *

Маршрут автобусĕн водителĕ 16 çын пуçтарăнмасăр çывăрма та выртмасть.

* * *

Манăн характере тиркеме кирлĕ мар – ылтăн вăл! Вăт сирĕн нерв тытăмĕ вара хавшак.

* * *

– Санăн качча тухма вăхăт!

– Çапла-ха та, анчах та ниепле те йĕркеллĕ арçын тупаймарăм. Вĕçĕмех санăн упăшку пирки шухăшлатăп.

– Манăн упăшка пирки-и?!

– Çапла çав... Çавăн пек тăмсай тĕлне лексен мĕнле пурăнмалла унпа?

* * *

Балкон çинче тăратăп. Кĕтмен çĕртен юнашар çуртăн виççĕмĕш хутри балконĕ çинчен урама арçын тухса ўкет. Тăрать те тĕмсен хушшинчен тухать хайхи. Çўп-çапран тасалать. Унтан çўлелле, хăй тухса ўкнĕ балкон еннелле, пăхса кăшкăрать: "Миçе илмелле?!"

* * *

Кўршĕ уйрăмра ĕçтешсем апельсин çиеççĕ. Манăн вара ун тĕлĕшпе аллерги. Куççуль шăпăртатса юхать. Çак самантра юнашарах пуçлăх иртсе пынă-мĕн. Эпĕ мĕншĕн хурлăхлăн макăрнине ыйтать хайхи. Эпĕ кўршĕсем апельсин çинине калатăп. Тепĕр уйăхра пуçлăх мана преми пачĕ – апельсин туянмалăх...

* * *

Кăçал тинĕс мана кĕтсе илеймерĕ... Çавăнпа ман пата хăй килес терĕ ахăр – çумăр пулса...

* * *

– Сирĕн хваттер ытла та пĕчĕк пулас?

– Çапла. Анчах та эсир ăçтан пĕлетĕр çакна?

– Йыттăр хўрипе енчен енне мар, çўлтен аялалла суллать те...

* * *

– Анне, эсĕ мĕншĕн мана "хура списока" кĕртнĕ?

– Санран спам килме пуçларĕ.

– Мĕнле спам тата? Мĕн калаçатăн?

– "Манăн укçа пĕтрĕ", "Мана çĕнĕ куртка кирлĕ", "Çĕнĕ йышши пушмак куртăм" йышши...

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич** любой. Т. 89613393363.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**29.Картофелекопалки, косилки, грабли,** пресс-подборщики, **погрузчики,** доильные аппараты. РАСПРОДАЖА! ДОСТАВКА! Т.: 89373758095, 89379559802.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**41.Гравмассу, гравий, песок** речной, карьерный; **щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89278404595.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**65.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень** известк-й, чернозём. Т.: 89196567752, 89093005705.

**66.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Уч-м ВОВ и пенсионерам – **скидки.** Т. 89176769379.

**74.КЕРАМБЛОКИ** вибропрессованные, пропаренные. **Все размеры. Доставка.** Т. 89176776846.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**138.ОКНА, ДВЕРИ. Обшивка.** Замер, доставка, демонтаж бесплатно. **Гарантия** 15л. Т. 89196624097.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 8-903-322-04-79.

**180.Комбикорм, зерно, отруби,** муку горох-ю. Д-ка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**190.Заборы,** откатные **ворота, козырьки, навесы.** Т. 89176500640.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит.** Д-ка. Т. 89033220479.

**358.Торф, навоз, ОПГС, песок** /речной, карьерный/, щебень, керамзит, бой кирпича, чернозём, асф. крошку. Пенсионерам – скидки. Т. 89278680644.

**361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-960-307-31-51.**

**364.Пластиковые ОКНА, ДВЕРИ.** Замер – бесплатно. Пенсионерам – скидки. Т. 89278447811.

**464.Гравмассу, песок, щебень, чернозём.** Д-ка. Т. 89603098191.

**465.Гравмассу, песок, щебень, чернозём.** Д-ка. Т. 89093054261.

**501.Гравмассу, песок** строительный, **щебень.** Т. 89520269954.

**514.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **цемент** в ассортименте. Т.: 8-927-668-94-54, 8-927-667-26-04.

**546.Тротуарные ПЛИТЫ,** брусчатку, **бордюры, водостоки.** Доставка, укладка. Т. 89033582042.

**559.Зааненского козла** /Козловский р-н/. Т. 8-903-063-62-86.

**561.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-917-677-66-55.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**562.Коров, бычков, лошадей.** Т. 8-961-345-05-28.

**563.Бычков, телок, коров** и лошадей. Т. 8-967-794-92-82.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**90.Бурение скважин** на воду "под ключ". **Т. 8-987-576-65-62.**

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**246.Бурение скважин** на воду. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**278.Кровля,** обшивка сайдингом, утепление. Т. 89176500640.

**547.ЗАБОРЫ** /профнастил, сетка-рабица, ж/б, кованые/, **ворота, калитки.** Сварочные работы. Т.: 89033582042, 44-20-42.

### ĔÇ РАБОТА

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

« ХЫПАР »

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 24.07.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7850. Заказ 2823.